ИСТОРИПЕ КУЛЬТУРА ТĔПЧЕВĔСЕН
К.В.ИВАНОВ ЯЧĔЛЛĔ ФОНД

**Сарри Мишши**

# ÇĂЛĂНĂÇ ФИЛОСОФИЙĔ

Шупашкар 2009

ББК 87.3 (2РОС.ЧУВ
С 21

Проект ертӳҫи – В.П.ИВАНОВ, истори наукисен докторӗ.

**Сарри Мишши.** Ҫӑлӑнӑҫ философийӗ. –Шупашкар: Историпе культура тӗпчевӗсен К.В.Иванов ячӗллӗ Фонд, 2009. – 79 с.

Кӗнекере чӑваш пурнӑҫӗ пӗтсе килнӗ вӑхӑта сӑнласа панӑ. Автор ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗсене шыраса япала, энерги тата информаци ҫаврӑнӑшӗсем патне килсе тухать. Вӗсем ҫине аянса кӑна ҫӑлӑнса юлма пултарнине ӗнентерсе тата ҫирӗплетсе парать.

Руководитель проекта – В.П.Иванов, доктор истории ческих наук.

**Сарри Мишши.** Философия спасения. – Чебоксары: Фонд историко-культурологических исследований .К.В.Иванова, 2009. – 79 с.

В книге исследуется катастрофическое состояние чувашского народа. Предлагаются методы спасения, включающие круговороты вещества, энергии и информации. Показываются и доказываются, что они являются основами жизни, а их поддержание и есть основной способ спасения жизни людей.

Сарри Мишши (Желтов М.П.)
Фонд историко-культурологических
исследований им. К.В.Иванова

**Умсăмах**

Хальхи глобализаци вăхăтěнче тěнчери халăх-сем умне пěтес хăрушлăх сиксе тухрě. Глобализаци юхăмě пурне те пěрпеклетет. Тěрлě халăх çыннисем хăй культурисен хальлěхěсене çухатаççě. Вěсен культури пěтет. Ку ěç, пěр пěтěмěшле илсен, чěлхе пěтнипе çыхăннă. Чěлхесем мěншěн пěтнине никамах та пит ăнланса пымасть. Пысăк халăхсен чěлхисем вăй илеççě пулать те, пирěн вара хамăрăнне манса каймалла, тет. Анчах та кунта, куç кěрет, чěлхе мěнне пěлменни пěтерет. Чěлхе вăл çěр калаçăвě. Кашни халăхăн хăйěн çěрě, территорийě пур. Енчен те пěр-пěр халăх çыннисем çав çěре манса кайрěç пулсан, çав самантрах вěсен калаçăвě те улшăнать. Чěлхи кăна мар, ӳчě те улшăнать. Мěншěн тесен çын мěн çиет, çав пулать. Хальхи вăхăтра пире ют çěр çимěçне çитереççě. Апла, çав çимěçпе пěрле ăша ют чěлхе тата ют ӳт кěрет. Ку питě вăрттăн пу-лăм. Кунта пысăк халăхсен чěлхине алла илсе ас-симиляциленни те мар, кунта чи пысăк пулăм – çěре пăрахни хуçаланать. Çавăнпа та глобализаци хăрушлăхěсене сирсе ярас тесен, пирěн чăн малтан тăван çěрпе çěлеме, пурăнма вěренмелле пулать. Çакă пулать те, пирěн шутпа, çăлăнăç çулě. Çакă çăлăнăç çулěнче никама та айăплама, кӳренме те юрамасть. Ытти халăх çыннисем пěрре те айăплă мар. Пěтес текеннисем кăна пěтеççě. Кам хăй хальлěн пурăнас тет вара, вăл хăйěн тăван çěрěпе ěçлеме пуçлать. Ку пěрре те çăмăл мар. Ют çын ӳстернě çăкăра çисе ларма питě çăмăл. Ун чухне эсě хăвна, тен, вăйлăрах та ăслăрах туятăн. Анчах çав вăхăтрах ху пěтсе килнине сиссе те юлайма-

стăн. Тăван çĕр çинче ху ĕçлесе туман çăкăра çисе савăнса ларнă вăхăтрах эсĕ чĕлхене те, çынлăха та манса каятăн. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, тăван çĕр чĕлхине манса кайнăçем ĕнтĕ, выльăха тухса пыратăн. Кăна, чăн та, никам та сисмест. Тепĕр хут калатпăр – ку питĕ вăрттăн пулăм. Кунсăр пуçне тата халăхсене урăх çĕре куçарса кайнисем те пулнă. Ку та çавах. Урăх çĕрти çын урăх çимĕç çиет. Вăл çав самантрах улшăнса каять. Калăпăр, ялтан хулана кăна куçнă пултăр. Унта хулара вĕт йăлт урăх. Эпир пĕр сăмах каламасăрах Канада çăкăрне, Африка бананне, Краснодар панулмине çиетпĕр. Тата ытти те. Хăвăр кам пулса тăнине халь чухлатăр ĕнтĕ. Эсир самантрах тĕнче çынни пулса тăратăр. Япăх-и вăл е лайăх, кăна хальлĕхе никамах та пĕлмест. Анчах çав апат айкашĕвĕнче эсир хăвăра çухатнине, чăн та, никам та сисмест. Кун пек çынсен тăван чĕлхийĕ те, тăван çĕршывĕ те çук. Халь тин вăл глобализацилленнĕ çын (глобал).

Çакăн пек хăрушлăхсем чăнласах сирĕн куç умне ӳкеççĕ пулсан, апла, чăн малтан хăвăрпа кăна мар, тăван çĕрпе ĕçлеме пуçламалла терĕмĕр. Пире тăван çĕр кăна çăлма пултарать. Анчах çав ĕç калама çук пысăк шайра пулмалла. Тĕнчере çĕртен аслă та ăслă урăх пулăм çук. Ăна хальлĕхе эпир ăнланмастпăр-ха. Каларăмăр, вăл Турă пек пире тăван чĕлхене те, хамăрлăха та парать. Хамăр çынсем вĕсем, пĕлетĕр-и, пирĕн çĕр çинче ĕçлекенсем, чи лайăх çынсем. Мĕншĕн тесен вĕсене çĕр хăй тăвать, пулăшать те. Вĕсем çĕр çинче, тăван çĕр çинче, çирĕп тăраççĕ. Шутлатпăр, çакă çĕрпе çыхăнтарса, çăлăнас тесе, çырнă пĕчĕк ĕç те пире çирĕпрех тăма пулăшать пулĕ тетпĕр. Эсир те çак ĕçе хутшăнасса шанатпăр. Пĕччен хальлĕн çăлăнас тăвасси пулмасть. Халăхпа пĕрле тесен вара, çăлăнăç çулĕ

уçӑлатех, паллах. Ку çул тем тӗрлӗ. Эпир халӗ пӗрне кӑна суйласа илетпӗр. Ку вӑл тӑван çӗр çулӗ. Эпир шутлатпӑр, кам та кам хӑйӗн тӑван çӗрӗпе утать, çавӑ çӑлӑнать. Çавӑнпа та хамӑр тӑван çӗр çинчен шухӑшлама тытӑнатпӑр. Чӑн малтан эпир сире тӑван çӗр тӑрӑх пуçа çапса утса тухма ыйтатпӑр. Тӑван çӗре пӗтӗм чун-чӗрепе, ал-урапа туйса илес тесен ун çине выртса та пулин пӑхӑр. Çӗр хӑй вӑйне паратех. Вара тин пирӗн чӗлхе те, çынлӑх та вӑйланасса шанатпӑр.

# 1. Глава. Тĕнче никĕсĕ
## 1.1. Тĕнче çаври

Тĕнче çаврисем çинчен эпир калаçман мар. Анчах та нихăçан та çав çаврасене хамăрăн çăлăнăç çулĕсем пек курман. Хамăр ăçтан тухнă тесе ыйтсан, эпир çавраран тухнă тесе каланă пулăттăм. Çавăнпа та çаврасем пирки пирĕн халь тата урăхларах шутласа илмелле пулать. Çаврасенче эпир çĕнĕ функци куратпăр. Вĕсем пире пурнăç тата чĕлхе кăна мар параççĕ, вĕсем пиртен чăн çынсем туса хураççĕ. Çаврасем çине çапларах куçпа пăхса шутласан, пирĕн ума тем те пĕр сиксе тухассăн туйăнать. Мĕншĕн тесен пирĕн ăс кăна мар, чĕре те шутлать. Чĕре шутлавĕ тепĕр чухне ăс шутланинчен тĕрĕсрех те килсе тухать. Аса илĕр-ха, кам утса курман пулĕ пуçа пĕксе те пуçа çапса тăван çĕр тăрăх. Ун чухне кашнин чĕринче темле калама çук пысăк вăй, савăнăçлăх хуçаланма тытăнать. Тăван тавралăхран хитри тата сипли мĕн пултăр. Çавна шута илсе тăрар. Чăн та, чĕлхе те, çын пулас тени те ăспа шутласа илмелли япаласем мар. Çапах та эпир ку пулăмсен тупсăмне шутласа илетпĕрех пулĕ тетĕп. Çавăнпа та, умсăмахра каларăмăр, чĕлхепе çынлăх тăван çĕрпе çыхăннă. Çĕрпе мĕнле ĕçлетĕн, мĕн çиетĕн-ĕçетĕн – çапла пулать.

Çак гипотезăна çирĕплетес тесен, апла, чăн малтан çĕр тупсăмне тупмалла. Вăл, паллă, çĕр çавринче. Çĕрпе, çĕр çаврипе ĕнтĕ, пĕтĕм тĕнче çыхăннă. Апла, тĕнче çаврисене те пĕлмелле. Кунта çут çанталăк тата общество çаврисем кĕреççĕ. Чĕлхе вăл хăй те пĕр çавра вĕт. Мĕн калатăн, çавна илтетĕн. Каллех калатăн – каллех илтетĕн. Чĕлхе пĕр вĕçĕмсĕр çаврăнса тăрать. Çавăнпа мар-и вара эпир

мĕн каличченех мĕн калассине пĕлетпĕр. Ку чăнласах та çавра калаçăвĕ. Мĕн-ма тесен эпир хамăр та çавра.

Эпир çĕртен тухнă, çĕрех кĕретпĕр. Пурăннă чухне çав çĕр çимĕçĕсенех çисе пурăнатпăр. К. Маркс калашле, çĕр вăл пирĕн ӳтех (неорганическое тело), вăл пире çитĕнтерет. Тĕрĕссипе каласан, пире çĕр çаври тăрантать. Çавăнтан илсе тăратпăр эпир пурăнмалăх тупăша. Çав тупăша тĕрĕс илсе тăрас тесен пирĕн ытти çаврасене те çĕр çаврипе килĕшӳллĕн çавăрттармалла. Калăпăр, ял çаврăнăшĕ е заводри çаврăнусем. Вĕсен те, пирĕн шутпа, çĕр çаврине евĕрлемелле. Çавăн чухне кăна пĕтĕм тĕнче çаврисем системăланаççĕ те, пĕр-пĕрне хирĕçлемесĕр пурăнма пуçлаççĕ. Çапах та вĕсен çаврăнăшĕсене пĕлес тесен пирĕн чăн малтан çĕр çаврăнăшĕн тупсăмне тупса палăртмалла пулать.

Çĕр çаврăнăшĕ, пирĕн шутпа, экологи хутлăхĕпе çыхăннă. Вăл хăй пĕр экологи хутлăхĕ пулса тăрать. Чăн та, çут çанталăкра никам та пĕри тепĕринсĕр пурăнма пултараймасть. Çут çанталăк, ку паллă, питĕ çураçтаруллă тĕнче. Килти хуçалăхра, калăпăр, çĕр, ӳсентăран, выльăх йышĕ пĕр пĕринпе килĕштерсе тăраççĕ. Кам çав килĕшĕве курса тытса тăрать, çавă лайăх пурăнать. Çынна пăхăнман çут çанталăкра та çавах. Тĕслĕхрен, кашкăрпа мулкач йышĕ, хурт-кăпшанкăпа ӳсен-тăран йышĕ пĕр пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çакăн пек çаврасем çĕр çинчи чи аялти çаврасем çинче тытăнса тăраççĕ. Кăна тăпра микробиологийĕ ăнлантарса парать.

Хальхи вăхăтра çаврасен чылай йышĕ татăлса пĕтнĕ. Çавна пулах экологи кризисĕ пуçланать. Калăпăр, тăпрари микроорганизмсем (редуцентсем) пĕтнипе, халĕ ӳсен-тăран каяшĕсемпе кирлĕ пек усă

курма çук. Халĕ тислĕк те пулса çитеймест. Пĕрмаях минераллă удобренисемпе усă курнăран тăпрари микроорганизмсем вара татах та пĕтеççĕ. Çавра татăлнă. Экологсем каланă тăрăх хальхи вăхăтра шыв, сывлăш, çутă, ытти элементсен çаврăнăшĕсем япăх çаврăнса ылмашăнса тăраççĕ. Сăмахран, атмосферăра кăмрăкăн йӳçĕ газĕ (углекислый газ) нумайланса пырать. Унпа ӳсен-тăрансем усă курса ĕлкĕрейместĕ. Çавна пулах Çĕр чăмăрĕ ăшăнса пырать (теплица эффекчĕ). Пĕр градус ăшăнсанах Çĕр çинче катастрофăсем пуçланаççĕ, пуçланчĕç тесен те тĕрĕс. Акă мĕн тăвать çавра татăлни.

Çĕр чăмăрĕ çинчи биосфера планетăпа пĕрлех пуçланса кайнă теççĕ. Пурнăç, апла, куçкĕрет, тĕрлĕ стихийăсен чиккинче пуçланса кайнă. Пурăнма тесен шывĕ те, тăпри те, сывлăшĕ те, çути те кирлĕ. Çавăнпа та пурнăç океанран тухнă тенипе килĕшесех килмест. Пурнăç, пирĕн шутпа, тăпраллă çĕрте, шывпа сывлăш пур çĕрте пуçланнă. Кунсăр пуçне, пурнăçĕ вăл хăй те пĕр çавра пулнă (биотический круговорот). Нобель премии лауреачĕ Эйген каланă тăрăх, пурнăç вăл хăй энзимсенчен тăракан автопоэзлă система. Автопоэзлă система вăл – хăй тĕллĕн пурăнма тата кашни элемент тепĕрне тума пулăшакан система. Çавăн пек система хăй майлă темле чĕрĕ организм пулса тăрать. Вăл хăйне аталантарма, пайланма, ас туса юлма пултарать. Пĕтĕм чĕрĕ чунсем çапла çаврасенчен пулса кайнă пулать. Чăнах та, енчен те пĕтĕм çут çанталăка пăхса тухсан, тӳрех пур япала та çаврасенчен тытăнса тăнине асăрхатăн. Уçлăх та йăлтах çавраллă. Çăлтăрсемпе галактикăсем те циклсенчен тăраççĕ. Гегель калашле, çут çанталăк кашни пулăма тепĕр хут туса пăхать. Ку тĕп принцип. ***Çавра принципĕ.***

Енчен те тĕнче никĕсĕнче çавра тăрать пулсан, халĕ çапла шутлама пулать, чăн малтан пирĕн çав çаврасене тата вĕсемпе мĕнле ĕçлемеллине пĕлмелле пулать. Кунта тӳрех каласа хăвармалла, тĕнче никĕсĕнче нимле пĕр тĕп элемент та пулма пултараймасть, элементсен çаври кăна пур. Тĕнче вăл шăтăкла (сеть) тенипе те çырлахма май килмест. Мĕншĕн тесен, шăтăкла вăл хăй пĕр çавра. Çаври мĕнрен тытăнса тăрать тесе ыйтас килет. Тĕнче, паллă, вĕçĕ-хĕррисĕр çавралăх. Апла, тĕнче пултăр тесен, çав çаврасене упрамалла, вĕсене аталантармалла, усă курма вĕренмелле. Ку тепĕр çăлăнăç çулĕ пулма пултарать. ***Çавра çулĕ – çăлăнăç çулĕ.*** Калас пулать, тĕнче пахалăхĕ, кирек мĕнле япалан та ĕнтĕ, çаврăнса тăнине пула ӳсет. Япала е, калăпăр, пулăм пĕр вĕçĕмсĕр çаврăнать. Çав вăхăтра вăл хăй пахалăхне пĕчĕккĕн пулсан та улăштарать. Кунта шут пахалăха куçнин саккунĕ (переход количества в качество) ĕçлет.

Эпир çавра саккунĕ япаласемпе ĕçленĕ пек кăтартрăмăр. Анчах та кирек мĕнле пулăмра та, идеаллă пулăмсенче те çаплипех. Тĕнчере, паллă, япалана упракан саккун кăна мар, энергие тат информацие пĕр стрăмран тепĕр стрăма куçаракан саккун та ĕçлет. Энерги те пĕр энергирен теприне куçса çаврăнса çӳрет. Шухăш та, калаççĕ, пĕр çавра пек упранать. Çав вăхăтрах энергипе япала пĕр вĕçĕмсĕр пĕр-пĕрне куçаççĕ. Çавра принципĕ пĕр пĕтĕмĕшле принцип пулсан, апла, çăлăнăç çулĕ çине тăтăмăр пулсан, пирĕн кашни çав çаврана хамăр тавра шырама тытăтнмалла. Ăна тупса тĕпчемелле, вăйлатмалла.

Çавра питĕ конкретлă япала пулмалла. Чăн та, ĕç тăвас тени ху таврари тĕнчене çавăрттарса яни маар-и вара. Ĕçлĕ çын япаласен куçăмне

йĕркелет. Вара тин ĕç пулать. Мĕн чухлĕ çыхăнтарма пĕлет – ĕç çавăн чухлĕ ăнать. Тĕнче юхăмĕ çине ӳксен вара çав ĕç хăй тĕллĕнех пынă пек курăнать. Ку тĕслĕхе куç умĕнчех курма пулать. Акă, ялта пĕри нимех те пек тумасть. Анчах унăн кил-хуçалăхĕ çирĕп тăрать. Мĕншĕн тесен вăл çыхăнтарма пĕлет. Ĕçе урлă-пирлĕ тусан – ĕç ăнмасть. Кун пек чухне, ку çын пурнăç йĕрри çине пусайман вара, теççĕ. Пурнăç ăннипе ăнманни те, апла, çавăрттарма пĕлнипе çыхăннă. Пĕри сасартăк пуйса каять, тейĕпĕр. Паллă, кирлĕ вăхăтра, кирлĕ çĕрте мĕн çыхăнтармаллине çыхăнтарнă та вăл – ĕçĕ ун хăй тĕллĕнех шума тытăннă. Сасăртăк чухăнланни те пур. Ун пек чухне, пĕлсех тăр – тем çаври татăлнă.

Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе пама пулать. Халĕ тин, пĕтĕмлетсе çапла калама та пулать пуль. ***Тĕнче никĕсĕнче çавра выртать. Çав çавра, çаврасем тесен тĕрĕсрех те пуль, пирĕн çăлăнăç çулĕ е çулĕсем пулса тăраççĕ.*** Чăн та, çавра çулĕ çине ӳкнĕ çын, çаврăннăçемĕн, пĕрех улшăнать, улшăнмасан та çав çаврарах пулать. Кунта тӳрех тӳрĕ çулпа кайни лайăхрах мар-и теме те пулать. Ӳсĕмлĕрех те хăвăртрах та пек курăнать. Анчах та, тӳрĕ çул тени çавран пĕр утăмĕ, пайĕ кăна пулать. Пĕр пĕтĕмĕшле пăхсан, пур япала та çавра çулĕ çинче выртать, çаврăнать. Чăн та, Анăç тӳрĕ çулпа (линейный мир) утать, çавăнпа та хăвăрт аталанать. Тухăç çавра çулпа утать (кружиться) – çавăнпа та аталанаймасть. Анчах та, пăхăр-ха, Тухăç вăйлăран та вăйлă аталанать, Анăç вара тем чăхăмлать (кризис). Тӳрĕ çулпа каяканăн ăшĕ хыпнă, тет. Çапла килсе тухмасть-и пурнăçра. Ун пек ан пултăр тесен, пурнăçăн тĕп саккунĕсене пĕлмелле. Пирĕн шутпа,

хăвăн утăмна евĕрлесе утмалла. Вара такăнмастăн, çухалса та каймастăн.

Куртăмăр, çавра саккунĕ космосра та, Çĕр чăмăрĕ çинче те, чунра та ĕçлет. Космосра каларăмăр, çăлтăрсен тĕнчине çавăрать, Çĕр çинче биосфера йĕркелет, чунра вара канлĕхпе хускануллăх хуçаланаççĕ. Эпир, хальлĕхе космос ĕçĕпе лармаллăх вăй пухайман-ха, анчах та çĕр ĕçĕпе тата чун вăйĕпе туллин усă курма пултаратпăр. Малашне те пурнăç йĕркеллех пултăр тесен, мĕнле калаççĕ-ха, хăвăн çуртна упра, теççĕ. Упраканĕ вара вăл çын, кил хуçи. Çав çавăрттарать ку тĕнчене.

## 1.2. Çын вырăнĕ.

Çын вырăнĕ пирки тĕрлĕрен шутлаççĕ. Ĕлĕкрех çын тĕнче варринче тăратчĕ (человекоцентризм). Хальхи вăхăтра вăл ытти чĕрчунсен ретĕнчех (гомология). Биосферăра чĕрĕ организмсене тĕпе хураççĕ (витацентризм). Кунта шутламалли çук мар. Антроплă принципа пăхсан, пĕтĕм космос çын патнелле, çын пултăр тесе аталанать. Апла, Джордано Бруно калани тĕрĕсех. Çын тĕнче никĕсĕнче. Çав вăхăтрах çынран асли çук тени те тĕрĕсех мар. Мĕншĕн тесен ун пек чухне çын хăйне çеç курма тытăнать. Ытти тĕнче унăн «тарçи» пулса тăрать. Халь тин çын мĕн ыйтать, çавна тумалла пулать. Анчах та ку тĕнчере çыннăн кăна мар, ытти чĕрĕ чунсен те пурăнмалла вĕт-ха. Çын питĕ вăйланса кайнă пирки пĕтĕм çут çанталăк пĕтес хăрушлăх та сиксе тухрĕ. Кун пек килсе тухнин пĕртен пĕр сăлтавĕ – çынна тĕнче варрине лартни. Ун пек ан пултăр тесен пирĕн, çыннăн чăн вырăнне шыраса тупмалла пулать. Малтарах пăхса тухнине шута илсен, çыннăн

тĕнче варринче те, варринче те пулмалла мар пек. Çын, чăн та, икĕ енлĕ мар-и-ха. Ӳт-пĕвĕпе вăл биологи организмĕ. Апла, ун вырăнĕ ытти чĕрчунсемпе юнашар. Ăс-тăнĕпе çын таçта та тăма пултарать. Пур тĕнчене курса тăрас тесен унăн тĕнче варринех тăма тивет. Унтан пĕтĕмпех курăнать. Кашни япалапа çыхăнма, тĕнчене хăвна мĕнле кирлĕ çапла йĕркелеме пулать. Апла, ***çын вырăнĕ тĕнче варринче те, варринче те мар. Ăспа вăл варринче, ӳтпе пур çĕрте те.*** Çавăн пек чухне кăна вăл пурне те курса ăсласа тата кашни япалана тӳрлетсе ăсталаса тăма пултарать.

Тĕнче никĕсĕ – çавра, терĕмĕр. Тĕнчене çаврасен йышĕ пек курса тăрсан, çын вырăнĕ таçта çавра тавра, е çавра варинче пулмалла. Чăн та, çын ĕç йĕркеленĕ чухне, ĕçе çавăрса янă чухне ĕнтĕ, ăспа çавра варринче. Вăл пурне те курать, пуриншĕн те шухăшлать. Шухăшласа хунине пурнăçа кĕртес тесен вара, унăн ал-урипе ытти чĕрчунсемпе юнашар тăрса ĕçлеме тивет. Калăпăр, мĕнле те пулин хуçалăх йĕркелекен çын чăн малтан йăлт шухăшласа хурать, проектне те тăвать. Кăна таçта айккинче тăрса тăваймастăн. Проекта пурнăçлас тесен вара, алла ĕç хатĕрне илсе, ыттисемпе пĕрле юнашар тăма тивет. Унсăрăн нимĕн те пулмасть. Калăпăр, выльăх-чĕрлĕхпе çыхăннă хуçалăх витине те тутарттарать, курăкне те ӳстерттерет. Çынпа хутшăннă чух çынпа юнашар пулмалла.

Кирек мĕнле тĕслĕх илсе кăтартсан та çын вырăнĕ иккĕллĕ килсе тухать. Ахальтен мар çынна био-социаллă организм пек кураççĕ. Биологи енчен пăхсан ытти чĕрчунсемпе пĕрле гомолгин пĕр ретĕнче. Социологи енчен пăхсан вăл тĕнче варринче. Унта тăрсан кăна вăл хăй тавра пĕтĕм тĕнчене çавăрттарма пултарать. Мĕншĕн çапла пулма пулта-

рать тесе ыйтсан, тӳрех ку пулăм тĕнче пахалăхĕпе ҫыхăннă теме пулать. Тĕнчепе ҫын, ҫынпа тĕнче пĕр уйăрăлми ҫыхăннă. Вĕсем пĕр-пĕринпе тĕкĕрленсе тăраççĕ. Ҫавăнпа та ҫын ырăпа пăхсан, тĕнче те тĕкĕр пек ыррăн пăхать. Усаллăн пăхсан вара – усаллăн. Кунта тата субъектпа объект хутшăнăвĕ кăна мар, темле субъект-субъектлă хутшăну та пур. Ҫын мĕнле пăхнине тĕнче мĕнле сисет-ха. Кирек мĕнле ĕç тума пуçла, тĕнче сана ку ĕçе ҫавăрттарма пулăшатех. Ку, паллă, евĕрленипе ҫыхăннă. Ҫут ҫанталăкри пур япала та пĕрне пĕри мĕнпе те пулин евĕрлетех (отражение). Тĕрĕссипе эпир пурте гомологиллĕ пĕр ретре. Ҫавăнпа та ҫын тунă кирек мĕнле хускану та ытти япаласем е чĕрĕ чунсем урлă каять. Пурте хускалса илеççĕ. Хускалу, паллă, тĕрлĕрен пулать. Тĕслĕхрен, вăрлăх аксан ӳсен-тăран шăтать, ҫĕре таптасан – ҫĕр хытать. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пĕтĕм ҫут ҫанталăк субъект пекех курăнать. Мĕншĕн тесен, каларăмăр, вăл сирĕн хусканăвăра евĕрлет. Вăл «чунлă» пек, унăн хăйĕн пурнăçĕ тата хутшăнăвĕ пур. Ҫут ҫанталăкăн ҫапла пахалăх пурри пулăшать ҫынна ĕç тума. Ăна пĕтĕм тĕнче пулăшать. Апла, ***вăл чăнласах тĕнче варринче кăна мар, тĕнчепе юнашар та тăрать.*** Тĕнче ăна итлет, тăнлать, ҫупăрлать, пулăшать т.ыт.те.

Тепĕр чухне ҫын тĕнче варринче мар, хĕрринче те ҫук. Ăçта-ха вăл? Вăл, пирĕн шутпа, канать. Вăхăтлăха вăл ниçта та ҫук. Вăл хăйĕнпе хăй. Кун пек туни питĕ усăллă. Тепĕр чухне ĕç ăнманни те пулать. Шухăшласа хунисем тĕрĕс килсе тухмаççĕ. Алли-ури те ĕç патне пымасть, ҫын йăнăш хыççăн йăнăш тăвать. Ун пек чухне вăл вăхăтлăха та пулин канса илет, хăй патне таврăнать. Апла ҫын вырăнĕ тĕнче варрипе-хĕрринче кăна мар, хăйĕн патĕнче те. Унăн вĕт хăйĕн тĕнчи пур. Ҫак

тĕнче çинчен пирĕн, тен, ытларах та калаçма тивет. Мĕншĕн тесен шалти тĕнче тулашринчен вăйлăрах. Унта çын хăйне хăй çуратать. Çăлăнăç çулĕ, апла, тулашри тĕнче тăрăх кăна мар, шалти тĕнче витĕр те выртать. Мĕнле çулсем-ши вара вĕсем? Унти тĕнчери çын вырăнĕ ăçта-ши? Кунта, пирĕн шутпа, çын психикине шута илмелле пулать. Биологипе социаллă пурнăçĕ çыннăн психики урлă çыхăнать. Психика ĕнтĕ вăл пурнăçа туйса-сиссе тăни. Çын хăйне психикăра кăна пĕлет. Ун вырăнĕ, апла, хăйĕнпе юнашар. Анчах та унпа юнашар тăраканни, е хăй шыраса тупни вăл ахаль çын мар. Пирĕн шутпа, шалти юнашар тăракан çын унран лайăхрах, пысăкрах, ăслăрах, илемлĕрех т.ыт.те. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ун пек тепĕр çынна Турă тесе те калама пулать. Хĕрес йăтнă çынсем ахальтен мар пирĕн Турă чĕрере теççĕ. Наука чĕлхипе каласан, вăл чунри тепĕр çын, хăвăртан хаклăрах çын. Çын кашни утăма çав çын виçнипе, пăхнипе тăвать. Совеç тени те пур. Совеçлĕ çын хăйне хăйĕн туррин куçĕпе виçет.

Ку çеç те мар. Кирек мĕнле çын хăйĕн пурнăçне, ĕçне, шухăш-туйăмне хăйĕнчен пĕлтерĕшлĕрех çын куçĕпе виçет. Калăпăр, ун пек ют çынсем аттеанне, çывăх юлташ, вĕрентекен е пуçлăх пулма пултараççĕ. ***Шалти тĕнчере кăна мар, тулашри тĕнчере те çын вырăнĕ, апла, çывăх çын çумĕнче.*** Ку питĕ пĕлтерĕшлĕ кăтарту. Çывăх мар çынран, пач ютран, апла, çын тарать пуль. Шалти чунра вара ютти çук. Унта сан тепĕр иккĕмĕш çын пурăнать. Вăл санран лайăхрах пулсан – вăл Турă. Енчен те çав шалти çын япăхрах пулсан, вара эсĕ ху та япăха тухатăн. Ун пекки те пур. Кирек мĕнле пăхса тухсан та, çын яланах тепĕр çын çумĕнче. Апла, çирĕплетсех калама пулать. ***Çын вырăнĕ çын***

***çумĕнче. Ку чăнлăхран иртме çук. Тĕнче варрине те, хĕррине те вăл çын урлă тухать.*** Çав çын вăл е шалта, е тулта пулать. Шалти çынна Турă теме пулать, тулашрине тăван теме май пур. Эпир пурте пĕр пĕринпе пĕр тăван. Çăлăнăç çулне тупас тесен, апла, куçкĕрет, çынпа пурăнма вĕренмелле. Çăлăнăçĕ вăл çынпа çын хутшăнăвĕнче. ***Çăлăнăç хутшăнура.*** Ку гипотезона тӳрех ăнланса илме те çук. Кун пирки эпир малалла та шутлăпăр.

Çын вырăнĕ пирки шутласа кайсан, пĕр иккĕленмесĕр, вăл – хуçалăхра теме пулать. Кашни çыннăн хăйĕн килĕ, тавралăхĕ, çурчĕ-хуралчĕ, хуçалăхĕ пур. Çын хăйĕн хуçалăхĕнче кăна çын. Ютра вăл – ют. Килте кăна хăйне хăй тупать. Хуçалăхĕ пирки эпир каярах калаçăпăр. Халĕ вара, куçкĕрет, çын тĕнче варринче тени, вăл хăйĕн хуçалăхĕнче хăй хуçа тенипе пĕр килет. Хуçалăхсăр çын çук. Кашнин хăйĕн пурăнмалăх килĕ пур. ***Çыннăн чăн вырăнĕ, апла, кил.*** Эпир халь çын вырăнĕ пирки шутласа тĕнче варрипе хĕрринчен пуçласа турри патне те çитрĕмĕр. Иккен, çавсем пурте килтех, хуçалăхрах пур. Ку пĕчĕклетсе кăтартни мар, ку тĕрлĕ пысăк тĕнчен шайлă пулăмĕсене конкретлă туса кăтартни пулчĕ.

Пирĕн шутпа, çыннăн тепĕр вырăнĕ те пур. Вăл – социаллă чĕрĕ чун, терĕмĕр. Апла, вăл халăхпа пурăнать, вăл – общество çынни. Çыннăн обществăри вырăнĕ пирки калаçнă чух, чăн малтен, вăл çынпа пурăннине шута илмелле. Унăн пĕтĕм ĕçĕ çын урлă пулса пырать. Апла, çын тепĕр хăйĕнпе хутшăнакан çын ăшĕнче те ларать. Вăл хăйне урăх çын урлă курать. çапла тума пĕлни ун чăн вырăнне палăртать. Вăл пĕр самантрах хăй те, çав вăхăтрах урăх та. Çын хăйне çын урлă курать. Ун пек чухне кам куçĕпе хăвна куратăн-ха, теççĕ. Чăваша илес пулсан

вăл, чăн малтан, хăйне вырăс куçĕпе курать. Унра, калăн, вырăс ларать, е урăхла каласан, вăл хăй вырăсра ларать. Икĕшĕ те тĕрĕс. Вырăс çынни чăвашшăн чи пĕлтерĕшлĕ çын пулса тăрать. Çавăнпа та общество аталанăвĕ те, çын вырăнĕ те нумай чухне вырăс çыннипе çыхăннă. Кунта урăх пит нимех те урăхла шутламалли çук пек. Анчах та пĕтĕмлетсе çапла каласа хăвармалла пуль: ***çын чунĕ хăйĕнче мар, урăх çынра ларать.*** Мĕнле-ха капла тесен, тӳрех калама пулать. Çын нихçан та хăй тĕллĕн çеç пурăнмасть. Вăл обществăллă чĕрĕ чун. Вăл тепĕр çын урлă кăна çын пулма пултарать. Апла, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ун чунĕ те хăйĕнче кăна мар, ытти çынсемпе йĕркеленĕ çыхăнура та. Çын общество результачĕ. Маугли ача тĕслĕхĕ кăна питĕ лайăх çирĕплетсе парать. Çын обществăра кăна аталанма пултарать.

Апла, çак шухăшсем çине таянса шутласан, çын вырăнĕ таçта халăхпа çыхăннă тĕрлĕ хутшăнусенче пулмалла пек. Çын вырăнĕ халăхра теме те пулать. Ахальтен-и вара çын хăйĕн пурнăçне халăхшăн парать. Ун пек тĕслĕхсем нумай. Мĕншĕн тесен вăл хăй – халăх. Халăх ăна çуратса ӳстерсек тăрать. ***Çук, вăл халăхăн пĕр пайĕ кăна мар, вăл хăй – пĕр халăх. Çын вырăнĕ, апла, халăхра.*** Çын халăхпа пĕрле кăна çын пулса çитме пултарать. Çавăнпа та çынна халăхран уйăрни яланах сиенлĕ. Ун пек чухне, аса илĕр-ха, ностальги текен чир пуçланать. Халăхпа пĕр пулнă çынна тĕрлĕ сăлтасене пула уйăрнă та, вăл халь çав пĕрлĕхшĕн тунсăхлать. Халăхпа пĕрлешсен, хăй çисе ӳснĕ çĕр çимĕçне каллех çиме пуçласан, ун ӳт-пĕвĕ чирлеме, чунĕ тунсăхлама пăрахать. Ку тĕслĕх çын вырăнĕ ăçта пулнине питĕ çирĕппĕн кăтартса парать. Çын халăхра кăна, халăхпа кăна пулма пул-

tarать. Çавăнпа та хальхи вăхăтри глобализаци процесĕ çынна халăхсăр тăратса хăварнине ырлама çук.

***Çын вырăнĕ çемьере тени те тĕрĕс.*** Çынпа пĕр юнлă çемье кирлĕ. Çав вăхăтрах çав çемйенĕн пĕр ĕç тумалла пек. Асăрхăр, çын çут çанталăкра-и, çын хутшăнăвĕнче, е халăхра – пĕрех вăл темле çаврара. Тĕнче хăй пĕр çавра. Тĕнче çаврине лексен вара вăл тĕнче çынни пулса тăрать. Глобализаци, терĕмĕр. Çемьере пулсан, вăл çемье çаврине лекет. Çемье çаври çынна çуратса ӳстернипе çыхăннă. Çын йĕркеллĕ çуралса ӳстĕр тесен унăн темиçе сыпăклă пулмалла. Ваттисем, вăй питтисем, пĕчĕккисем тата хуçалăхĕ те пулмалла. Çемье вăйĕ ачасенче кăна мар, ун хуçалăхĕнче те. Хуçалăх çинчен каярах калаçăпăр, терĕмĕр. Чăн çемье, вăл халĕ те çапла, виçĕ сыпăклă. Асатте-асаннесем ăс парса тăраççĕ, ашшĕпе амăшĕ ĕçлеççĕ, вĕт-шакăрсем вĕренеççĕ. Кашни сыпăк пĕри-тепĕринпе тачă çыхăннă. Пĕр сыпăкĕ кăна татăлтăр – çемье çук. Калас пулать, мĕн пуррипе çуккине ачасем питĕ çивчĕн сиссе тăраççĕ. ***Çын вырăнĕ – çемьере, тени, пирĕн шутпа, чи тĕрĕсси.*** Паллах, онтологи енчен пăхсан, çын çавра варринче. Унсăрăн вăл хăйĕн рольне çухатать. Çаврасем нумай терĕмĕр. Тĕнче çаври те пур, паллах. Ун варрине тăрса тĕнче çаврине çавăрттармалăх вăй хальлĕхе çукрах-ха. Ун пек вăй тĕнче уçлăхне тухсан кăна тупăнать пулĕ.

Калас пулать, кирек мĕнле япалапа та пуç пулас тесен, чăн малтан, çав япала ытамĕнчен тухса ӳкес пулать. Ку тĕнче ахальтен мар объект-субъектлă. Çын хăйне хăй тĕнчерен уйăрать, çавăнпа та пуç пулса тăрать. Тĕнчепе пĕрле пулсан вăл чĕрĕ чĕрчунсен шайне анса ларать. Гомологи енчен пăхсан çапла килсе тухать те. Çавăнпа та

онтологи енчен курсан, эпир пурте тĕнчерен уйăрăлнă ҫынсем. Ҫавăнпа та ҫак тĕнчепе усă курма та, ҫав вăхăтрах унпа пĕр пулма та пултаратпăр. Ҫын вырăнĕ, апла, тĕнчене объект-субъектлă тунипе те ҫыхăннă. Субъект яланах тĕнче варринче. Вăл ҫут ҫанталăк хирĕҫĕвĕсенчен ҫӳлерех тăрать. Унăн саккунĕсемпе усă курать (хитрость разума). Объект ăна хăйĕнпе юнашар тăратать.

Хальхи вăхăтра ҫынна Турă вырăнне хуни те пур. Тӳрех калас пулать, ҫын Турă мар. Енчен те Турă тĕнче варринче тăрать пулсан, ҫын хальлĕхе тĕнче хĕрринче кăна тăма пултарать. Турă вырăнне тăрас тесен унăн тĕнче ăслă, тĕнче вăйлă пулмалла. Кун пек тапхăр та ҫитме пултарать. Ун пек чухне пĕтĕм космос ҫынланать пуль. Ку питĕ интереслĕ, анчах пирĕн тема мар. Пирĕн ĕҫ тĕнчен тĕрлĕ пăтăрмахĕсенчен ҫăлăнасси. びсаларăмăр, ҫын хăй айăпне пула инкеке кĕрсе ӳкет. Ҫав инкекрен ҫăлăнас тесен тĕнчене питĕ лайăх пĕлмелле, унăн саккунĕсемпе усă курса, ăна хамăра кирлĕ пек йĕркелесе ямалла пулать. Хальлĕхе эпир тĕнче темле ҫавра шăтăкла пулнине кăна пĕлетпĕр. Пĕлнĕ таран ĕнтĕ ҫăлăнăҫ ҫулĕсене шыратпăр. Ҫăлăнăҫ тени тĕнчене ҫавра пек курни мар, ҫын ҫав ҫаврара хăш вырăнта тăнипе те ҫыхăннă. Ҫаврасем нумай терĕмĕр. Аса илсе тенĕ пек калатпăр: ҫут ҫанталăк ҫаврисем, ҫын ҫаври, общество тата ҫемье ҫаври. Ҫав ҫаврасемпе ĕҫлемелле пулать те пирĕн.

## 1.3. Ҫавра тупăшĕ.

Ҫыннăн тĕнчери пур ҫаврасене те ҫавăрттармалла пулать. Ҫавăн чухне кăна вăл хăйне пурăнмалăх тупăш илме пултарать. Чи кирли кунта

тупăш илни мар, чи кирли çав çаврасене хăвăртрах та, туллинрех тата вăйлăрах çавăрттарнинче. Енчен те çавра талса кайрĕ пулсан, кĕтсех тăр, эсĕ пĕр тупăшсăр тăрса юлатăн. Çавна куратпăр та. Сăмахран, халĕ çут çанталăк çаврисем, хуçалăхри çаврасем талнă пирки хамăр туса илекен апатсăр тăрса юлтăмăр. Пирĕн халĕ хамăр çисе тăранмалăх тырри те, сĕчĕ те, какайĕ те çук. Юрать ют çĕршывран кӳрсе килеççĕ те – пурнатпăр-ха теме пулать. Уншăн вара нефть е газ укçипе тӳлеме тивет. Ку, паллах, пĕрре те тĕрĕс мар. Çĕр ĕçĕ, тĕрĕссипе, нефть уçланинчен те тупăшлăрах пулмалла. Мĕн-ма тесен ку ĕç çынна тăрантать. Патшалăх вăйлă пултăр тесен, чăн малтан, ял-хуçалăхне чи пысăк шая лартмалла. Ун пек тума пирĕн те ăс çитмест, те ăсĕ урăхла шутлать, патшалăха индустриализацилемелле тет. Ку , паллă, тĕрĕсех мар. Кунта çĕр ĕçне питĕ пысăк шая, индустри шайне, çĕклемелле. «Иккĕмĕш симĕс» революци тумалла. Кăна тăвас тесен, чăн малтан, тĕнчене çавра пек курма вĕренмелле, çын ăс-тăнне улăштармалла. Умра калама çук пысăк ĕçсем. Анчах ун вырăнне эпир таврара çĕрпе ĕçлеме пăрахнине кăна куратпăр. ***Ку «симĕс революци», пирĕн шутпа, çăлăнăçăн пĕр çулĕ, тен, тĕп çулĕ те.*** Мĕншĕн тесен çыннăн, чăн малтан, хăйĕн тĕп ыйтăвĕсене, апат тата пурнăçа тивĕçтерекен ĕçсене тумалла. Вара тин ытти ыйтусене, çынлăх ыйтăвĕсене, татса пама юрать.

Çăлăнăç философийĕнче ял-хуçалăх ыйтăвĕ мала сиксе тухать пулсан, апла, чăн малтан, унти çаврасемпе ĕçлемелле пулать. Пĕрремĕшĕ вăл çав çаврана йĕркелени те мар, чăннипе унран мĕнле пайне илмеллипе çыхăннă. Çут çанталăкра пĕр шайран тепĕр шая вунă процентран ытла тупăш куçмасть. Унран ытла илме тытăнсан, çавра хирĕлсе

пĕтме тытăнать. çак саккуна тискер чĕрчунсем те пĕлеççĕ. Хăйсене кирлинчен ытларах илмеççĕ. Çын вара çаврана пĕтериччен илет. Тупăш илнине кура çаврана пăхма та пĕлес пулать. Мĕн чухлĕ илнине кашни çул каялла парса тăрсан та питĕ лайăх. Унтан та ытларах парсан, калăпăр, çĕр пахалăхĕ ÿсет. Вара тупăшне те ытларах илме пулать. Анчах та халĕ ял-хуçалăхра тупăша ытларах та ытларах илес тесе çаврана кирлĕ япаласене тавăрса пама манса каяççĕ. Тĕслĕхрен, тырă акса илнĕ хыççăн уя кирлĕ таран тислĕк кăлармалла. Унсăрăн тырă çаври талать. Халĕ, асăрхăр, пирĕн енче сайра хуçалăх тырă туса илет. Тырă çаври талнă. Çавăн пекех выльăх çаври талса пырать. Кун сăлтавĕ çарансене пĕтернипе çыхăннă. Пĕр вĕçĕмсĕр çитермелĕх сĕтеклĕ курăк юлмасан, паллă, выльăх йышĕ те чакать.

Кун пек талнă çаврасем чылай. Юлнисем те аран-аран тытăнкаласа тăраççĕ. Вĕсем те, ытла та нумай тупăш илес тенипе талаççĕ. ***Çавăнпа та эпир кирек мĕнле çавраран та вунă процентран ытла тупăш илмелле мар тесе шутлатпăр.*** Ытларах илнĕ пирки халĕ пурте талнă пек курăнаççĕ. Патшалăх хăй ларакан турата хăйех татса-касса пырать пек туйăнать. Ун пек ан пултăр тесен налогсене пĕчĕклетес пулать, çăкăр тата какайпа сĕт хакĕсене ÿстерес пулать. Ун чухне кăна ял-хуçалăх ĕçне чăнласах тупăшлă тума пулать.

Тупăш илнĕ чухне экологи виçине пĕлмелле. Пĕр сăмахпа каласан, кашни çавран хăй тĕллĕн пурăнма вĕренмелле. Çын çавра мĕнле çаврăннине пăхса кĕлт-калт тÿрлеткелесе çеç тăтăр. Тĕрĕссипе, ун тупăшне кăна илсе тăмалла. Хăй тĕллĕн çаврăнакан çаврасем чи тупăшлисем пулса тăраççĕ те. Мĕншĕн тесен вĕсене тытса тăма нимле тăкак та кирлĕ мар. Анчах та çын хальлĕхе ун пек

çаврасем тума пĕлмест. Ун шухăшĕпе мĕн чухлĕ тă-какă тӳсетĕн, çавăн чухлĕ тупăшĕ те ӳсет. Ун пек мар çав. Ял-хуçалăхĕнче халь тăкакланасси питĕ пысăк, анчах тупăшĕ ӳсмест. Ку паллă, мĕншĕн тнсен, çĕр ĕçĕнче тем чухлĕ техника, вĕсен тă-какĕсем питĕ пысăк. Тăкаксене ытла ӳстерни, иккен, ним те памасть. Ку тăкаклă çул çинчен пăрăнса тăкаксăрри çине куçмалла. Ку вара çавра хăй тĕллĕнех çаврăнни патне илсе çитерет. Çавра пĕр тăкаксăр тенĕ пек, хăй тенĕ пекех çаврăнса тăрать. Ун пек те пулма пултарать-и вара, тейĕр. Пур ун пек технологисем. Биологиллĕ вăйсем çине таянса ĕçлекенсем, сăмахран, çĕре сухаламаççĕ. Пĕрре акаççĕ те, тепре вырса илеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ӳстерекенсем шăварăнса тăракан çарансем туса панă. Кунта ял-хуçалăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулмалла тени те экологи шайне ӳстерет. Чăн та, çут çанталăк хăй мĕнле пу-рăнать, ял-хуçалăхĕн те çаплипех пурăнмалла. Пĕр экологиллĕ хутлăхра тырри те, çаранĕ те, выльăхĕ те, хурт кăпшанки те, пулли те, пахчисем те пулччĕр. Вĕсем пурте пĕр пĕринпе çыхăнса пĕри тепĕрне пулăшса пыччĕр. Чăн та, кашни çавра тепĕринсĕр пулмасть. Кунта темле хăйне майлă шă-тăкла çыхăнать. Хурчĕсемсĕр пахча çимĕç çук. Çаранĕ-шывĕсĕр выльăх-чĕрлĕх ӳсмест, тырпулĕ те уя тислĕк кăлармасăр пулмасть. Пурте тепĕриншĕн ĕçлет. Çапла çыхăнса тăракан хуçалăх чăнласах та хăй тĕллĕн тенĕ пекех ĕçлесе тăрать, тупăшне кăна илсе ĕлкĕр.

Ял-хуçалăхĕ, апла, тĕрлĕ тупăшлă пулмалла. Моно хуçалăхсем пит кирлĕ мар пулĕ. Ял çыннин сĕтел тулли тĕрлĕ апат-çимĕç пулмалла. Пулли те, çырли те, çăкăрĕ те, какайĕ-мĕнĕ те. Çавăн чухне кăна экологи виçи пурнăçланать. Çав виçене пăхса тупăшĕ те тупăнать, çаври те çаврăнать. ***Çăлăнăç***

***çулĕ, апла, вăл экологи çулĕ.*** Тупăш çулĕ çине тăнă ял-хуçалăхĕ ниепле те ура çине тăраймасть. Хăйне хăй пĕтерсе кăна тăрать. Ахальтен мар ял-хуçалăхне халĕ «хура шăтăк» тесе хакласçĕ. Патшалăх тем чухлĕ укçа хурсан та усси çук. Мĕншĕнни паллă, мĕншĕн тесен çаврасем талнă. Çын çаврана аталантарас пирки мар, тупăш илес пирки кăна шутлать. Çавна пула пĕтĕм экологи хутлăхĕ пĕтнĕ тесен те тĕрĕс. ***Шухăша, апла, тупăш тата услам илес тенинчен урăх çĕререх куçармалла. Чăн малтан çаврасене çавăрттарса ямалла, вара вĕсене вăйлатмалла, унтан мĕнле тупăш илес пирки шутлама пуçламалла. Кунта та виçе пур, экологиллĕ хутлăх ванса ан кайтăр тесен, тупăш виçи вунă процентран иртмелле мар.***
Ял-хуçалăхĕпе пурте паллă тесен, индустрипе вара нимех те паллă мар. Индустрире мĕнле çаврасем вара тесе ыйтсан, тӳрех никам та ним те калаймĕ. Индустри çавраллă пулăм мар. Кунти тăкăксем тата пысăкрах. Кирек мĕнле производствăра та каяшсем (отходсем) нумай. Вĕсем çут çанталăк çаврисене пăсаççĕ. Кăна пурте пĕлеççĕ, анчах хальлĕхе нимех те тăваймаççĕ. Каяшсăр производство пулма пултараймасть, теççĕ. Анчах та çут çанталăк пĕр пĕтĕмĕшле илсен нимле каяш та хăвармасть. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир çут çанталăк мĕнле пурăннине курмастпăр та. Кунта вăрттăнрах тенĕ пек пĕр сисĕнкĕсĕрех кашни япала хăй вырăннĕ тупать. Промышленность япалисем вара, ăçта пăхатăн, çавăнта куçа тăрăнаççĕ. Вĕсем, куçкĕрет, пĕр çавра тăваймаççĕ. Вĕсем чĕрĕ мар, вĕсем вилĕ. Апла, тен, вĕсене чĕртмелле, чĕм кĕртмелле. Вара, тен, вĕсем çут çанталăкпа пĕр килĕç те экологи хутлăхне пăсма пăрахĕç. Кун çинчен те шутламан-ха эпир. ***Пирĕн шутпа, çак çул, чĕрĕлĕх çулĕ, чăнласах та индустришĕн çăлăнăç çулĕ***

***пулса тăма пултарать.*** Çакăн çинчен те шутласа пăхар мар-и. Мĕн вăл индустри çаври? Ăçтан тухать ун тупăшĕ?

Индустри çаврине пăхса тухиччен çут çанталăкăн пĕр саккунне пăхса тухмалла пулать. Çаврана кĕнĕ япала ниçта та çухалмасть. Кирек мĕнле улшăнусем пулса иртчĕр, унăн масси улшăнмасть. Çак саккун çине таянса вара хăш-пĕр экологсем кирек мĕн тусан та япалан темле каяшĕ юлатех теççĕ. Анчах та çав юлашки каяша та таçта усă курма пулать вĕт-ха. Ниçта та кайса хума май çуккă-тăк, ăна çут çанталăка кирлĕ пек япалапа тавăрса пама пулать. Халь, акă, тахçанхи сăрт-ту промышленность тăкса хăварнă тăпрана тепĕр хут çавăрттарса усă курма тытăннă. Çав тăпрара юлнă хаклă йышши металлсене тепĕр хут пуçтарса илеççĕ. Тĕрĕссипе, юлса пыракан каяшсемпе вĕçĕ-хĕррисĕр усă курма пулать, технологине кăна шутласа кăлармалла. Енчен те халĕ, çак «каяшсем пурпĕрех пулаççĕ» тенине пăрахăçланă хыççăн, эпир индустри çаврисене те тума пултаратпăр пек туйăнать.

Индустри çаври тĕрлĕ этапсенчен тăрать. Вăл конструктор ĕçĕнчен пуçланать те япалине туса усă курнă хыççăн пĕтет. Усă курнă япала пĕтни пирки шутламалла пулать. Кирлĕ маар япала юлашкисене ниçта хума та пĕлмеççĕ. Хуласем çумĕнче, халь ялсем çумĕнче те, тем тĕрлĕ свалкăсем ӳссе ларчĕç. Вĕсемпе усă курмалли технологисем çукрах тесен те тĕрĕс. Апла, çав технологисене тумалла пулать. Вăл мĕнрен килни тӳрех паллă. Çавна тума индустри çаври пултăр тесе ĕнтĕ, çав çавран тупăшне тĕрĕс илмелле. Унăн пĕр пайне каяшсене пĕтерме ямалла. Свалкăсене пĕтерме ятарлă налук илес пулать. Экологи налукĕ теççĕ ăна. Çав налук укçи каять те каяшсене пĕтерме.

Кун пек тунисем çук мар. Акă, пĕр тĕслĕх. Металлурги каяшĕсенчен строительство материалĕсем тăваççĕ. Яппунсем вăрманпа ĕçленĕ чухне унпа çĕр ытла процент таран усă кураççĕ. Йывăç кĕрпипе кăна мар, тымарĕ–турачĕ мĕнĕпе хута яраççĕ. Кун пек тĕслĕхсенче, куртăмăр ĕнтĕ, нимле каяш та юлмасть. Хими каяшĕсене илес пулсан халĕ биотехнологисем чылай лайăх аталаннă. Вĕсем пулăшнипе шывпа сывлăша кăна мар, ытти япаласене те каялла тавăрса пама пулать. Металлоломпа усă курни пирки калаçмастпăр та. Ĕлĕкрех тата çĕтĕк-çурăксене те пуçтаратчĕç. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, индустри çаврисем те çаврăнма пуçларĕç. Халь тин свалкăсенче те каяшсемпе ĕçлекен заводсем ӳссе ларчĕç.

Çак ырă тĕслĕхсем шанчăк кӳреççĕ. Халь тин, енчен те индустри каяшĕсем çухалчĕç-тĕк, урăх нимле катастрофа та пулас пек туйăнмасть. Анчах ун патне çитме нумай вăхăт кирлĕ-ха. Экологи налукне хальлĕхе илмеççĕ, штрафсем те пĕчĕккĕ. Çавăнпа та индустри каяшĕсем питĕ нумай. Сăрт-ту материалĕсене пуянлатакан предприятисен каяшĕсем, сăмахран, тăхăр вунă процентран та иртеççĕ.

Индустри каяш.семпе биотехнологи тата нанотехнологисем чылай ăнăçлă кĕрешме пултараççĕ пек. Нанотехнологи атомсемпе молекулăсем шайнче ĕçлет. Апла, кирек мĕнле япалана пĕр шайран тепĕр шая куçарма пулать. Биотехнологи кашни вилĕ япалана чĕрĕ организмсем пулăшнипе пуçтарма та, салатма та пултарать. Анчах та ку технологисем хальлĕхе япăх аталăннă. Çавăнпа та чи усăлли вăл пĕр системăра пухăннă каяшсемпе тепĕр системăра усă курни. Кирек мĕнле пулсан та каяшсемпе усă курнă чухне биосфера саккунĕсене, урăхла каласан, экологи саккунĕсене пăхăнни кирлĕ. Ун чухне кăна пирĕн çăлăнăç çулĕсем уçăлма пултараççĕ. ***Каяшсене***

***пĕтермелли пĕртен пĕр çул вăл – вĕсемпе усă курма вĕренни – çакă пулать биосферăна çăлакан тĕп çул.*** Анчах, каларăмăр. Ку çул тупăш илнипе çыхăннă. Каяшсемпе усă курни тупăшлă пулсан кăна, услам илсен кăна ку ĕçе тума пулать. Çавăнпа та тепĕр хут çирĕплетсех каламалла, экологи налукĕ те тупăш илме çул уçса тăма пултарать. Тĕрĕссипе каласан, каяш проблеми технологи проблеми кăна мар, вăл экономикăпа çыхăннă. Малашне экономика саккунĕсене улăштармалла пулать. Халь тин тупăш кăна мар илмелле, пурнăçăн хăйĕн мĕн тумаллине кăтартса тăмалла. Мĕншĕн тесен услам шыраса пĕтĕм индустри, çав шутра, каларăмăр, ял-хуçалăх та, биосферăна пĕтерме тытăнчĕç. Эпир вара биосферăн пĕр пайĕ, унсăрăн пурăнма пултараймастпăр. Çавăнпа та чăн мала пурнăç хăй тухса тăрать. Апла, ***çăлăнăç çулĕ халь тин тупăшпа мар, пурнăçа малалла тăсаснипе малалла каять. Ку, каларăмăр, индустри çаврисене чĕрĕлĕх кĕртнипе те çыхăннă. Малашне, кунта иккĕлнӳ çук, пĕтĕм тĕнче чĕрĕлсе ăсланса кайĕ. Ку – çăлăнăç философийĕн тĕп çулĕ.*** Хальлĕхе вара ку тĕп çул экологи налукне илме тытăнсан кăна уçăлма пултарать. Ун пек тăвас тесен экологи службине тата хытăрах аталантармалла пулать. Шкул ĕçĕнче мĕн пĕчĕкренех ачасене экологи саккунĕсене вĕрентмелле. Кашни предприятин, кирек мĕнле çавра пултăр, вунă прцентран ытла тупăш илме юрамасть. Каларăмăр, вара çавра хăйех çаврăнса вăйланса каять. Çаврисене, ăçта татăлнă, çавăнта сыпас пулать. Кунта чи кансĕрлекенни, паллă, çав çаврасене пĕлменни, пĕлнĕ пулсан та вĕсемпе ĕçлеменни. Хăй вăхăтĕнче ликбез пулнă пекех халĕ тĕнчене, пуринчен ытла биосферăна, çаврасен пуххи пек курма вĕрентмелле. Çын шухăшлавĕ çавраллă пултăр. Кашни пулăмра çавра

курма пуçласан, ăна çырса шутлама вĕренсе çитсен кăна çăлăнăç çулĕ уçăлассăн туйăнать.

## 2. Глава. Хуçалăх
### 2.1. Хуçалăх çаврисем

Çаврасем çинчен калаçнă чухне эпир тĕп вырăна хуçалăх çаврисене лартасшăн. Мĕншĕн тесен, çӳлерех каларăмăр, хуçалăх хăйĕн тытăмĕнче пĕтĕм тĕнче çаврисемпе усă курать. Чăн та, кирек мĕнле çут çанталăк саккунĕ, е общество йĕрки – пурте хуçалăхра палăраççĕ. Хуçалăх тĕнче саккунĕсемпе кăна мар усă курать, вăл тĕнчене хăйне мĕн кирлине тĕпчеме те ыйтать. Çынпа тĕнче хушшинче халĕ, вĕсене çыхăнтарса тăракан хуçалăх пур. Хуçалăх аслă та тарăн пулăм. Ю. М. Осипов калашле, хуçалăх вăл – пурăнăç. Паллă ĕнтĕ, çын тĕнчепе хăйĕн пурнăçĕпе çыхăнать. Пурнăççăр мĕнле çыхăну пултăр? Пурнăç вăл хăй чĕрĕ çыхăну. Хуçалăх тĕрлĕ çыхăнусем йĕркелет. Унта космос çыхăнăвĕсенчен пуçласа, çемье çыхăнăвĕсем таранах палăраççĕ. Сăмахран, кирек мĕнле çын та климат мĕнлине космос паллăрăмĕсене пăхса пĕлет. Экологи хутлăхĕ ххуçалăх çаврăмĕсене хӳтĕлесе тăма пулăшать. Çын, çемье тата общество çаврăмĕсем те çавах. Кирек мĕнле çавра та хăйне хӳтĕлет., хăйне упраса хăварас тесе, структурине кăна мар, хăйĕн хăтланăвĕсене улăштарать. ***Пĕр пĕтĕмĕшле каласан кашни çавра хăйне майлă пĕр гомеостат. Çавăнпа та кашни çаврана гомеостатлă шухăшлавçă (гомеостатическое мышление) теме пулать.*** Енчен те эпир çак шухăша тĕпе хурсан Матуранăпа Варела сăмахĕсене те шута илмелле пулать. Вĕсем каланă тăрăх кашни чĕрĕ организм хăйĕн пурнăçне кура шухăшлама пĕлет. Çавра вара, Эйген каланă пек, хăйне чăнласах чĕрĕ организм пек тыткалать. Апла, хуçалăх çаврисем те чĕрĕ организмсемех. Енчен те

эпир, калăпăр, апат çаврисене (пищевые цепи) чĕрĕ организмсем пек курса тăма тытăнсан, эпир вăл çаврасене нихăçан та татас çукчĕ. Анчах та эпир вăл çаврасенче нимле чĕрĕлĕх те курмастпăр. Ӳсен-тăранпа чĕрчунсем хушшинчи çыхăнăва эпир хими çыхăнăвĕ пек кăна куратпăр. Анчах та, хăвăрах шутласа пăхăр-ха, ку ***апат çаври экологи хутлăхĕ кăна мар, тĕнчене тытса тăракан çавра та пулса тăрать. Мĕншĕн тесен апат çаври ытти çаврасемпе çыхăнса çĕр тытăмне те, сывлăша та, шыва та улăштарать. Çын, çемье тата общество çаврисем хуçалăх çаври çине таянни пирки каламастпăр та.***

Хăш-пĕр хуçалăх çаврисем комоспа та çыхăнаççĕ. Халь тин космосри ытти планетăсен пурлăхĕпе мĕнле усă курасси пирки чăнласах шутлаççĕ. Космос программисем хуçалăх çаврисемпе тачă çыхăннă. Çаврасемпе ĕçлес тесен, вĕсен пурнăçне пĕлмеллех, паллах. Çавра хăй чĕрĕ организм пек терĕмĕр. Апла, вăл çуралать, вăй илет, вилет те. Çак этапсене пăхса тухсан çаврасем хăйсем те пĕр йыш пулса тăнине курма пулать. ***Çавра хăй, гомеостат ăнлавне пуçра тытсан, пĕр гомеос пулса тăрать. Çавра йышĕ, апла, тĕрлĕ гомеоссенчен тăрать.*** Гомеос хăйне чĕрĕ чун пекех тыткалать. Калăпăр, унăн пĕр пайĕ талсан, вăл ăна урăххипе çыхăнтарма пăхать. Пĕр ӳсен-тăранĕ пĕтсен, ун вырăнне выльăхсем урăххиипе усă курма пултараççĕ. Гетеротрофлă организмсем те хăйсен апат циклне ним те мар улăштараççĕ. Çавăнпа та, чăн та, гомеоссен йышĕ тĕрлĕрен.

Кунта эпир ытларах чĕрĕ çаврасем пирки калаçу пуçларăмăр. Анчах та вилĕ тĕнчере те çаврасем çавах. Сăмахран, аслă геологи циклне илсен те, Д. Лавлокпа Л. Маргулисăн çаврисене пăхсан та, вĕсем те хăйсене чĕрĕ чĕрчунсем пекрех

тытнине куратпăр. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, вĕсем пĕтĕм планетăна упрас, биосфера параметрĕсене пăсас мар тесе ĕçлеççĕ. Чăн та, вĕсем пирки ку çаврасем ăслă пулĕ тесе те калама пулать. Гея–Çĕр гипотези атмосфера тытăмĕпе температурине упрать. Калăпăр, Çĕр чăмăрĕ çинче яланах пурнăçа кирлĕ таран йӳçĕ кăмрăк газĕ пултăр, тет. Çĕр планета та Хĕвел тавра ахальтен çаврăнмасть пуль. Çав çавра та планета çинчи пурнăçа упрать пек туйăнать. Кун пек шутланинче темле гилозоизм та курма пулать. Анчах та, енчен те кашни çут çанталăк пулăмĕ пĕри теприншĕн пурăнмалăх хатĕр пулнине курса тăрсан, кунта пит хирĕç тăма та май çук. Ку çут çанталăкра кашни теприншĕн пурăнать. Апла, çут çанталăкĕ те пĕр пĕтĕмĕшле илсен, пĕр чĕрĕ организм пек курăнать.

Ку шухăшсем патне эпир гомеоссем (çаврасем) мĕнле япаласем пулни пирки шутласа çитрĕмĕр. Пирĕн шухăшпа пĕтĕм космос гомеоссенчен тăрать. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе çыхăннă. Хуçалăх çаври вара – тĕпре. Ăна çын ытти çут çанталăк çаврисем çине таянса тăвать. Çавна пулах пĕтĕм тĕнчене урăхла çавăрттарса ярать. Çаврасем урлă пĕтĕм космоса ăслатать, чунлатать, гомеоссем пекрех тăвать. Ĕлĕкрех çын тĕнчене чĕрĕ чунлă курса тăнă, анчах та çав чунлăх ăçтан тухнине ниепле те ăнлантарса парайман. Халь тин эпир авалхи идея патне таврăнса, гомеоссем урлă ĕнтĕ, ку тĕнче чăнласах та чунлă тесе калама пултаратпăр. Мĕншĕн тесен, Эйген калашле, кашни çавра хăйне субъект пекех активлă тыткалать.

Хуçалăх çаври пуринчен ытла активлă. Вăл пĕтĕм çын тĕнчине тăрантать. Çавăнпа та ун çинчен пирĕн нумайрах шутламалла, тата тĕпчемелле те. ***Хуçалăх çаврине эпир çын йĕркеленĕ***

***ĕç пек куратпăр. Тĕрлĕ тĕнче элеменчĕсем пĕр çĕре тенĕ пек пухăнса пĕр-пĕринпе çыхăнаççĕ те пĕр çавра туса хураççĕ. Анчах та ку çавра çут çанталăк тунă çавра кăна мар. Ку – гуманоес.*** Вăл хăйне кăна мар пăхать, вăл çынна та тăрантать. Çын унăн тупăшĕнчен, каларăмăр, вунă процентне яхăн илме пултарать. Вăл çут çанталăкра çук япаласенчен тытăнса тăма пултарать. Калăпăр, техникăра нимле механика япалисем те çут çанталăкра хăйсем тĕллĕн пулса тăма пултраймаççĕ. Заводсенче вара вĕсене пĕрлештерсе, çавра туса ĕнтĕ, чăн-чăн машина пуçтараççĕ. Ял-хуçалăхĕнче те ӳсен-тăранĕ те, выльăх-чĕрлĕхĕ те çут çанталăкăннипе танлаштарсан расна. Вĕсене ĕнтĕ çын хăй суйласа илсе аталантарса урăхлатнă. Çавăнпа та пĕтĕмлетсе çапла калама пулать. ***Хуçалăх çаврисем çын пуç пулса тăракан гомеоссем, е урăхлатса каласан гуманоессем.*** Вăл çаввrасенче расна элементсем. Вĕсен ратни те йышĕ те расна. Çитменине вĕсен йышĕ питĕ хăвăрт ӳссе пырать. Çав çаврасене пула халĕ тем тĕрлĕ машин туса çитерчĕç, тем тĕрлĕ ӳсен-тăран е выльăх-чĕрлĕх пăхса ӳстерчĕç. Ку ĕç малалла аталанса пырать. Мĕн патне çитĕпĕр, калама хĕн, анчах та паллă, çын хăй мĕн тунипе çырлахса лармасть.

Мĕн пуласси паллă пек. Вăхăт çитĕ, гуманоессем те çынсăрах ĕçлеме пуçлĕç. Хальлĕхе вĕсем çын тытса пымасан, часах талса каяççĕ те, сӳнсе лараççĕ. ***Вăхăт çитĕ, çаврасенчи кашни элемент, хăй çаври те пĕр пĕтĕмĕшле илсен, çын пекех ăсланса çитĕç те хăйсем тĕллĕнех çаврăнма пуçлĕç. Ун чухне вара идеаллă çаврасем пирки те кулаçма сăлтав тупăнĕ. Вĕсем вара çут çанталăкри чăн-чăн гомеоссем пек пулса тăрĕç. Вĕсем вĕт хăйсемех, çын пулăшмасăрах çаврăнаççĕ. Çын пуçарса янă çаврасен малашлăхĕ пурин те çапла килсе тухассăн туйăнать. Ун***

***чухне вара чăнласах та çăлăнăç çулĕ уçăлĕ, мĕн-ма тесен, халь тин çын çут çанталăк панă япалана пĕрне те çухатмĕ – вĕсем пурте çаврасенче пĕр вĕçĕмсĕр çаврăнса тăрĕç, вĕсем иксĕлми çут çанталăкăн чĕрĕ пайĕсем пулĕç.***

Анчах ун патне çитиччен халĕ нумай вăхăт иртĕ. Çын çаврасене çавăрттарса ярса тупăш илесшĕн. Çав тупăш мĕнрен тухнине пирĕн тĕплĕнрех пĕлмелле пек туйăнать. Кунта ĕç пĕр пĕрне эксплуатациленинче те мар. ***Тупăш тени вăл япаласен çыхăнăвĕнчен хăйех тухать. Икĕ япалана пĕрлештерме пултартăн-тăк, çавăнтан вара, çав хутшăнуран тупăш тухать. Сăмахран, суту-илӳ процессĕ – икĕ тавар, е икĕ çын тĕл пулнă та – тупăшланаççĕ. Кунта пĕри те тупăшсăр юлмасть. Апла, çавран тупăшĕ çавраран хăйĕнчен тухать. Ăна ĕнтĕ система эффекчĕ теме те, икс фактор теме те пулать. Эпир, гомеос терĕмĕр те, кирек мĕнле организм та хăй эффектлă тенĕ пулăттăмăр. Ку вăл – организм эффекчĕ.***

Апла, хуçалăх çавринчен тупăш илес тесен, çав çаврана туллин те хăй тĕллĕн çавăрттарма тăрăшмалла. ***Çавра эффекчĕ*** вара хăех тухать. Хальлĕхе çаврасем пулса çитмен те тупăш вырăнне тăкак анчах куратпăр. ***Туллин çавăрни*** ĕнтĕ вăл çаврара кирлĕ элементсем пулмалла тенине пĕлтерет. Унсăрăн çавра çăмăллăн çаврăнаймасть. Мĕнлерех элементсем кирли пирки шутласа кайсан, чăн малтан, пĕри тепинсĕр пурăнма пултарайман элементсем кирлĕ пек туйăнать. Тĕслĕхрен, кашкăр мулкачсăр пурăнаймасть, мулкачĕ курăксăр, курăкĕ тăпрасăр т.ыт.те. Кунта кашни тепĕринпе усă курать. Тĕрĕссипе, тĕнче пĕри тепĕринпе усă курни çинче тытăнса тăрать те. Çавăн пек çыпăçтарса, йĕркелесе тухнă ку тĕнчере. Ăна, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, синергетика те-

се те хаклама пулать. Ахаль, усăсăр выртакан япала пачах та çук. Кашни япалан хăйĕн вырăнĕ пур. Пĕри тепĕринпе хирĕçӳллĕ пулсан та вĕсем хушшинче темĕн чухлĕ ытти япала вĕсене мирлештерсе тăрать. Çавăнпа та ку тĕнчене йĕркелесе çитернĕ тесен те тĕрĕс. Йĕркелени, чăн малтан, çаврасенче палăрать. Кирек мĕнле япала та хăй вырăнне мĕнле те пулин çаврара тупнă.

Кунта чи хакли çав çаврa тупăшĕпе вĕсене пĕр сиен кӳмесĕр пурăнма май тупни. Кирек мĕнле çавра та тупăшлă. Тепĕр чухне алăпа салатса аркăпа та пуçтарма май пур. Çут çанталăк калама çук тараватлă. Сăмахран, пĕр пĕрчĕ тĕмлĕ ыраш аксах пиншер пĕрчĕ туса илме пулать. Анчах та çĕрĕ тулăхлă пултăр тесен, вăл çĕре тислĕкпе тата ытти пахалăхлă япаласемпе çеимçетсех тăмалла. Пĕр çавра система пĕр вĕçĕмсĕр парса тăма пултараймасть, ăна урăх çистемăри япаласемпе пуянлатмалла. Хуçалăхри çаврасенче йĕрке пĕр çĕртен теприне куçса тăрать. Çаврасене çавăнпа та çыпăçтарма пĕлес пулать. Ӳсен-тăран çаврине, тĕслĕхрен, выльăх чĕрлĕх çаврипе пĕрлештермелле. Пĕри тепĕринсĕр нумай пурăнаймасть. Çавра ĕçĕ калама çук кăткăс та йывăр. Вĕсене кирлĕ пек çыпăçтарса яма пысăк талант тата пĕлӳ кирлĕ. Хальлĕхе пире çав пĕлӳ тата çавра çавăрма кăмăл çукки тытса тăрать.
Хуçалăхри çаврасем çинчен калаçнă чухне, тĕслĕх вырăнне хурса, кил çаврине пăхса тухма пулать. Кил çаври çемье çавринчен пуçланать. Çемье çавăртăн-тăк, пĕтĕм тĕнче çаврăнса каять. Вăл тĕнчене хуралтăсем çавăрни те кĕрет. Сăмахран чăваш килĕ йĕри-тавра хуралтăллă. Кашни хуралтă пĕри тепĕрне хӳтĕлет. Çемье çавăртăн пулсан, сан çемьере ватти-вĕтти те, вăйпитти те пулмалла. Кунта каллех пĕри теприне пулăшса пырать. Халь тин

вара картишне тухсан, витесенче выльăх-чĕрлĕхĕ те, кайăкĕ-кĕшĕкĕ те пулмалла. Выльăх тĕрлĕрен пулсан аванччĕ. Ĕни те, сысни те, лаши те... Тата кашни çулах çĕнелсе ĕрчесе тăмалла. Ун пек пултăр тесен ами те аçи те пултăр. Кайăк-кĕшĕкĕ те çавах. Кил хушшинче чăххи-чĕппи, хур-кăвакалĕ какаласа тăтăр. Вĕсене тăрантма халĕ тин тырри те куракĕ те, пахча çимĕçĕ те кирлĕ. Апла, хуçалăхра çарансем, ытти анасем кирлĕ. Люцернă та акмалла, тыррине те вырмалла, çĕр улмине те çитĕнтермелле. Тем те кирлĕ. Çитменнине тата кашни культура тĕрлĕрен пултăр. Улми-çырли пирки те çавнах каламалла. Витамин тавраш̆е пурне те кирлĕ. Сад-пахча туллин йăтăнса лартăр тесен тата хурт-хăмăр ĕрчетмелле. Унсăрăн та май çук. Мĕнле кăна çавра çук пуль хуçалăхра, каласа та пĕтерме çук. Сăмах май, ялти тăвансене те манса каймалла мар. Вĕсем сана пулăшччĕр тесен, çемьен хăйĕн те ыттисене пулăшу парас пулать. Çапла вара килти çаврасем аталанса çаврăнса яла тухаççĕ, ялтан хуланалла туртăнаççĕ. Хуçалăх çаври, куратпăр, питĕ аслă та тарăн, тата вĕçĕ-хĕррисĕр.

Хулари индустри çаврисем те çавах. Пĕр-пĕр машина тăвас тесен çĕр тĕрлĕ ытти заводсене тĕрлĕ тĕслĕ детальсем тума хушаççĕ. Пĕр тĕп конвейер çумне пин тĕслĕ çавра сыпăнать. Индустрире пур çавра та сыпăнса çыпçăнса пĕтеймест пулин те, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, вĕсем те чиперех çаврăнкалаççĕ. Вĕсен каяшĕсем пысăкрах, çавăнпа та çут çанталăк пăсăлсах пырать.

Çут çанталăкри çаврасем çинчен калаçрăмăр. Вĕсем ĕнтĕ тахçанах йĕркеленсе çитнĕ. Вĕсене ăнланни тата вĕсемпе усă курма пĕлни кирлĕ. Çавăнпа та çут çанталăк саккунĕсене вĕренмелле.

Вĕсемпе усӑ курса хуçалӑх çаврисене çавӑрттарса ямалла.

Шухӑшсене пĕтĕмлетсе каласан, пур çаврана та çӑлӑнӑç çулĕ пек курма пулать. Çавра витĕмĕпе эпир халь пурӑнма кӑна мар, малашлӑха та çирĕппĕн пӑхма пултаратпӑр. Çавра чӑнласах та тĕнче никĕсĕ кӑна мар, вӑл çын тата общество никĕсĕ те. Çавралантарса янӑ тĕнче ӑслӑланса тата чунланса пырĕ. Ун чухне вара пачах урӑх ыйтусем сиксе тухĕç. Паллӑ, вĕсем çӑлӑнӑç ыйтӑвĕсем мар, вĕсем космос ыйтӑвĕсем пулĕç. Чӑн та, енчен те килте. Çĕр çинче ĕнтĕ, пурте чиперех-тӑк, мĕн-ма вара космосалла пӑхма тытӑнмалла мар. Унта та вĕçĕ-хĕррисĕр çавра. Вĕсене те пире хамӑра кӑна кирлĕ пек çавӑрттарса ямалла пулать. Ун чухне вара космос хуçалӑхĕ пуçланать. Ӑна çавӑрттаракансене Турӑсем теме те пулать. Анчах та ун патне çитиччен пирĕн, чӑн малтан, хамӑрӑн килте кӑна та пулин çаврасемпе ĕçлеме тытӑнмалла. Пирĕн шутпа, пĕтĕм наукӑна çаврасен саккунĕсене пĕлсе урӑхла çавралла курма тытӑнмалла. Çавра кӑна тупӑш, вӑй, илем, тасалӑх парать. Çĕр те, сӑмах май, ахальтен мар çавра, ахальтен мар хĕвел тавра çаврӑнать, Çав çаврасем пулсан вара пурнӑç нихӑçан та пĕтмест.

## 2.2. Укçасӑр экономика

Укçа теми рынок тапхӑрĕнче тĕп тема пулса тӑрать. Укçа пулсан тем те пур теççĕ. Пурте, çавӑнпа та, укçа тума тӑрӑшаççĕ. Анчах та, куçкĕрет, укçа экономики тĕнчене пĕтерет. Укçа шыраса çӳрекен çын ниме те уямасть, унӑн пĕртен пĕр критерий – укçа пултӑр. Çавӑнпа та вӑл, кирек мĕнле япалана е пулӑма укçа тупӑшĕпе виçет, ытти

пахалăхсене курмасть те. Кун пирки халĕ нумай çырма пуçларĕç. Кризис пуçланнăранпа кун пек укçаллă экономикăна (финансовая экономика) пĕтерме шут тытни те пур. Чăн та, ку тĕнчере укçа кăна мар ĕнтĕ пуç пулса тăрать. Тĕрĕссипе, ытти пахалăхсем те вăй илнĕ. Сăмахран, япалапа тирпейлĕ, хитре тата туллин усă курма пулать. Укçа тесе, çапса çĕмĕрсе ватса пĕтермелле мар. Ку пуринчен ытла çут çанталăка пырса тивет. Енчен те, экспертсем каланă тăрăх, эпир малашне те укçа çине таянса çут çанталăка пĕтеретпĕр пулсан, кĕтсех тăр, тĕнче катастрофăсен тытăмне лекет. Ун чухне вара каялла таврăнма май та юлмĕ, лăпкă пурнăç та пĕтĕ. Кунта, мĕн калани чăн пулсан, малтанрах шутласа хуни кирлĕ. Мĕн тума, тет, çут çанталăк ресурсĕсене тупăш шыраса пĕтермелле. Пирĕн ачасем, мăнуксем мĕнле пурăнĕç вара. Вĕсем валли эпир нимĕн те хăвармăпăр-и?

Малашлăх туприне туртса илес мар тесен пирĕн урăхла критерисем çине таянмалла пек. Сăмахран, çӳлерех каланă çаврасем çине таянса, кирлĕ япаласемпе пĕр вĕçĕмсĕр тата пĕр тăкаксăр усă курса, йĕри-таврара синергетикăллă тĕнче туса хурас пулать. Майсем, куртăмăр, çук мар. Тĕслĕхрен, конкуренци тенине пăрахăçласа пĕр-пĕрне пулăшу пама тытăнмалла. Енчен те эпир çаврасен тĕнчине туса хурас тесен, çаврасем çаврăнччĕр тесен, пирĕн конкуренци мĕнне манмасăрах çавран элемечĕсене пĕрпĕринпе пĕрле пурăнма, пĕри тепĕрне пулăшма вĕрентмелле пулать. Çут çанталăкра ун пекки çук мар. Симбиоз тата коэволюциллĕ çаврасем тем чухлех. Вĕсене курса, вĕсенчен вĕренсе пымалла. Çут çанталăк, калас пулать, миллиард çулсем тăршшипе тем те туса пăхнă, пирĕн пата вара пĕр-пĕрне пулăшнисем кăна çитнĕ. Çын та пулăшу результачĕ.

Хӑй вӑхӑтӗнче, каннибалсем пулнӑ чухне, вӗсем чутах пӗр-пӗрне ҫисе яман. Юрать общество табусем шутласа кӑларнӑ та, вӗсене Турӑ каланӑ шая лартнӑ. Социум вӑл, калас пулать, пӗрлештернӗ вӑй. Ҫын хӑй хальлӗн вӑйсӑр, анчах та пӗрлешсен, никам ҫӗнейми вӑй пулса тӑрать.

Ҫак шухӑшсене тӗпе хурсан, экономикӑна урӑх куҫпа курма вӗренмелле пек. Ӗҫ кунта укҫа тупӑшӗнче мар, ҫавра тупӑшӗнче. Ҫавра мӗн чухлӗ тупӑш пама пултарать, ҫавӑн чухлӗ кӑна илес пулать. Ҫаврана хӑй тупӑшӗн пӗр пайне панӑшӑн укҫа тӳлеме кирлӗ мар. Ҫаврасем пӗр-пӗринпе укҫапа мар, япалапа ҫыхӑнаҫҫӗ. Ҫав ҫыхӑнусем пӗр-пӗрне пулӑшса пыраҫҫӗ. Апла, эконоаикӑн тӗп тымарне, ҫаврасене ӗнтӗ, пӗр укҫасӑрах йӗркелесе яма пулать. Кунта ҫаврасен хутшӑнӑвне ӳстерни, паллӑ, ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа та сана урӑх ҫавра валли кирлӗ-тӗк япалана укҫа тӳлесе те илме пулать. Калӑпӑр, эсир опера итлесшӗн, е машина илесшӗн – укҫа тӳлӗр те мӗн кирлине илӗр. Анчах та укҫа тени кунта япала эквиваленчӗ мар, ҫавра эквиваленчӗ пулса тӑмалла. Ӗҫ кунта, асӑрхӑр, мӗн чухлӗ япала тунинче мар, ӗҫ – ҫавра ҫаврӑннинче. Ҫавӑнпа та укҫа тени те улшӑнмалла пек. Сан мӗн чухлӗ ҫавра, мӗнле ҫавра, мӗн чухлӗ тупӑш парать т.ыт.те. Ӑна халь чӑн экономика (реальная экономика) тесе хаклама пулать. Ун пек тумасан, ҫын япалара кирек мӗнле тӑкакпа тупӑш курса, улталаса, ҫут ҫанталӑка пӗтерсе хӑйне пӗтерме тытӑнать. Ҫавна куратпӑр та.

Ҫавра хутшӑнӑвӗ тӗлӗнмелле хутшӑну. Кунта, паллӑ, пӗрре пӑхсах ӑнланса илме те май ҫук. Питӗ аякра тӑракан ҫаврасене (тӗслӗхрен, ҫӗр улми ӳстерекен ҫыннӑн банан ҫисе курас килет) пасар е магазин таврашӗ пӗрлештерсе тӑрӗ. Вӗсенче кирек

мĕн те тупма май пулĕ. Анчах та, каларăмăр, укçи сан çĕр улми мĕн чухлипе çыхăнман, пачах урăхла, çĕр улми çаври мĕнле ĕçленипе çыхăннă. ***Кунта, çавра экономикинче ĕнтĕ,*** çаврана хăйне хаклама вĕренмелле. Пирĕн шутпа, кунта япала хакне экологи критерине шута илсе хумалла пулать. Ку критери çавра мĕнле çаврăннине шута илет. Енчен те çавра идеаллă çаврăнать пулсан, унăн продукцийĕ те таварлă курăнать. Калăпăр, эсир çĕре лайăх пахаласа тăратăр, хурт-кăпшанкăсемпе те усă курма пĕлетĕр, апла, сирĕн çĕр улми тап-таса та пĕр пек çап-çавракa та пĕр химисĕр – пĕтĕм стандартсене тивĕçтерет. Ун пеккипе ун пек маррине пире санэпидеми станци тĕрĕслевĕсем пулăшса тăрĕç. Кашни япалан çавра çаврăнăшне шута илекен стандартсем пулмалла. Патшалăх службисен вара çав стандартсене питĕ пăхса тămалла. Акă, пулчĕ те. Эпир экологи критерийĕ çине таянса, экологи енчен таса продукт туса илсе çавра çаврăнăшне пахаларăмăр. ***Халь тин эпир тупăша хăваласа хамăрăн çаврасене тек пĕтермĕпĕр. Пачах урăхла – эпир экологи хаклавне ўстерсе çут çанталăкпа пĕр пурăнакан çаврасене тата хытăрах пахалама пуçлăпăр. Кун пек экономикăна услам экономики тесе калаймăн. Кунта мала çавра пахалăхне хураççĕ. Вăл ун япали, результачĕ ĕнтĕ, экологиллĕ пулсан, вара çут çанталăк та вырăнта тăрĕ. Акă мĕншĕн кирлĕ пире укçасăр экономика.***

Шутлав техники аталаннăçемĕн, укçи те кирлĕ пулмасть. Техника мĕн чухлĕ çавра та сан мĕнле çаврасем çаврăнса тăнине шута илет те сана валли аякри çавра продукцине укçасăрах пама пултарать. Кунта, ку çут çанталăк пек ĕçлени (натуральное хозяйство) теме те пулать. Тен, ку тĕрĕс те. Анчах та çут çанталăка упраса хăварас тесен, çут çанталăк

хӑй ӗçленӗ пек ӗçлесен, тӗрӗсрех те килсе тухать пуль. Çапах та, асӑрхарӑр пулӗ, укçа пӗтӗмпех пӗтмест, ун пӗлтерӗшӗ экологи ӗçне шута илет, çавӑ кӑна. ***Вӑл – экологиллӗ укçа пулать. Çавӑнпа та укçасӑр экономика тесе калани те пӗтӗмпех тӗрӗс мар, тӗрӗсрех, экологиллӗ экономика (экологическая экономика) темелле пуль.*** Эпир ку ӗç çине тарӑнрах пӑхса çапла каланӑ пулӑттӑмӑр. ***Ку – çавра экономики.*** Пирӗн тӗллев çаврасене мӗнле те пулин тӗрӗс те туллин çавӑрттарса ямалла. çавна тума пулӑшать те ӗнтӗ экологиллӗ экономика. Экологи критерийӗ пире укçана çаврасемпе пӗрлештерет, экономикӑна çут çанталӑкран уйӑрӑлма памасть. Кун пек чухне, паллӑ, спекуляци туса, укçа пуçтарса пурӑнаймӑн. Кунта çаврасем пуç пулса тӑраççӗ.

Çавӑнпа та экологи енчен пӑхса хатӗрленӗ стандартсене шута илсе, пасарӗсене те, магазинӗсене те экологи енчен пӑхса уçмалла. Ун пек сутуилӳсем çук мар. Вӗсенчи продукци хаклӑрах. Çапла хаклани çаврасем мӗнле ӗçленине шута илет. Ку лайӑх. Ку ӗç çут çанталӑка пулӑшса пырать. Капла çут çанталӑкӑн малашлӑхӗ уçӑлса пырать. Апла, çын та хӑйне упраса хӑварма пултарать. ***Пӗр пӗтӗмлетсе çапла калаима пулать. Хальхи çын хӑй экологиллӗ çын пулса тӑрсан кӑна упранса юлма пултарать. Ун пек çынна хӑйне те экоГ теме пулать.***

Çӳлтерех каланӑ мелсене индустри çаврисене аталантарнӑ чухне те усӑ курма пулать. Калӑпӑр, енчен те ун каяшӗсем çукпа пӗрех пулсан, производство продукцине ӳнетсе те сутма пулать. Ялхуçалӑх продукцине хаклатса, экологи пайне шута илсе сутсан, индустри продуктне, каллех экологи пайне шута илсе, хаклатма пулать. çавӑн чухне кӑна çут çанталӑка нимле сиен те пулмасть пек туй-

ӑнать. Пӗр енчен ӑна каяшсемпе вараламастпӑр, тепӗр енчен ҫут ҫанталӑк пахалӑхне ӳстеретпӗр. Ҫакӑ пӗтӗмпех укҫаллӑ экономикӑран укҫсӑрри ҫине куҫсан кӑна пулма пултарать. Хальлӗхе, паллӑ, ку тенденцие укҫана экологиллентерсе кӑна тытса тӑма пулать. Малашрӑхра укҫа пачах пӗтет. ***Халӗ вара, усал ан пул, экологине пур ҫӗрте те шута ил. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ ҫӑлӑнӑҫӑн тепӗр ҫулӗ. Укҫи кунта экологи укҫи пулмалла.***

Хальлӗхе кунта мӗн каланине пурне те тума май килмест, анчах та, шутлатпӑр, ҫак экологиллӗ укҫа тата продукци ҫулӗ ҫине ӳксен тем тӗрлӗ ытти ҫулсем те уҫӑлӗҫ. Сӑмахран, мӗншӗн вара, ҫын пӗри тепӗрне пулӑштӑр тесен, ҫынна хӑйӗн продукци ҫуккӑ пулсан ӑна ху туса илнӗ ытлашши продуктпа пӗр тӳлевсӗрех тивӗҫтермеле мар. Кунта, пирӗн шутпа, ***парне экономики*** пирки те калаҫма пулать. Ку пулӑм та хуҫалӑхра чылай хытӑ аталаннӑ.

Чӑн та, кам парне парать, ҫавӑ вӑйлӑрах та ырӑрах курӑнать. Ӗлӗкрех кам пысӑкрах парне панӑ, ҫавӑ ҫӗнтернӗ, е парӑнтарнӑ пек килсе тухнӑ. Кун пекки халӗ те пур. Ҫынпа ҫывӑх пулас тесен, ӑна парне парса ҫывӑхлатаҫҫӗ. Пуринчен ытла кун пек экономика тӑвансем хушшинче аталаннӑ. Парне пӗр тӑвана тепӗринпе ҫывӑхлатать. Ҫавӑнпа та пулӗ кирек мӗнле уявра та пӗрне пӗри мӗн те пулин парнелеме тӑрӑшаҫҫӗ. Турӑсене парне пани те вӗсене ҫывӑхлантарнипе ҫыхӑннӑ. Мӗн те пулин ыйтас е тата ҫылӑха кӗнӗ пулсан, ҫын талнӑ ҫыхӑнусене парне парса сыпӑнтарма тӑрӑшать. Калаҫҫӗ, криминал хушшинче те кун пек пулӑм пур. Сан «хресне аҫу» санран укҫа илмест, вӑл хӑй сана пулӑшнӑшӑн кирлӗ вӑхӑтра хӑй те пулӑшу ыйтма пултарать. Ҫапла вара «пӗри тепӗрин аллине ҫӑвать».

Пулăшу экономики ***чун экономикине*** çывăх. Чăн та, кунта та укçапа мар, чунпа тӳлеççĕ. Эсĕ, калăпăр, çынна пулăшрăн. Эсĕ унран чунран тав сăмахĕ кĕтетĕн. Вăл сана тав тусан, вăл санпа тал-нă теме юрать. Енчен те тав сăмахĕ илтĕнмерĕ-тĕк, апла, вăл хăйĕн парăмне ĕмрипех хăй çинче йăтса çӳрĕ. Çав парăм уншăн тепĕр чухне ытла та пысăк пулма пултарать. Çавăнпа та хăвна пулăшнăшăн тав сăмахĕ калама ӳркенсе тăмалла мар. Ырă туни, çавăнпа та пуль, усалпа çаврăнса тухать. Кунта хирĕçлесе те калама пулать. Эсĕ, калăпăр, пĕр вĕçĕмсĕр ырă тăватăн, сан пата вара пĕр ырă та каялла çаврăнса çитмест. Ун пекки те пур. Анчах та ырă турăн пулсан, чăт. Никамран та, ырă тунă çынран пушшех те, нимле ырă та ан кĕт. Тĕрĕссипе, вăл эсĕ ырă тунине пĕлмелле те мар. Хăвăн та ун çинчен манса каймалла. Çавăн пек чухне кăна ырă туни усалпа çаврăнса килмест.
Анчах та пурнăçра, тĕрĕссипе, пачах урăхла тата ăнăçлăрах килсе тухать. Енчен те кашни çын хăйне ырă çын пек курать пулсан, вăл хăйне ырă тунă-шăн тепĕр çынна ырă тăвать, тепри тата тепĕрне. Кайрĕ те вара тĕнче тăрăх ырă çавра. Эсĕ ырă ту-ни вара сан пата пачах урăх çынсем урлă çаврăнса çитет. Хăшĕ-пĕрисем вара тĕлĕнеççĕ. Ăçтан ман пата çапла ырлăх килсе ӳкрĕ-ха, теççĕ. Кун пек пулăм вăл пурте ырă пулнипе кăна çыхăннă. Ырă ырă патне илсе çитерет. Усал вара, усал экономики патне çитерет. Ун пекки халĕ хытă аталаннă. Пурте пĕри тепĕрне усал тума тăрăшаççĕ. Сăмахран, халь-хи вăхăтри фирмăн секречĕсем ытти конкурентсем валли уçăлсан, ăна тӳрех «çисе» яраççĕ. Пĕри тепĕри ура хунине те илтнĕ. «Хура кĕвĕç» тенине те илтмен мар. Хăш-пĕр ялсенче пĕр хуçа тепĕр хуçан кил-çуртне вут чĕртсе çунтарни те пулнă, пур

та. Кун пек экономикăна ***кĕвĕçӳллĕ экономика*** теме пулать. Пĕрне пĕри пĕр укçасăрах пĕтерме пулать иккен. Ку та укçасăр экономика. Вăл ан хуçалантăр тесен, «ан вĕлер» тенĕ пекех «ан кĕвĕç» темелле. Кĕвĕçӳллĕ экономика «хура» та «шурă» та пулма пултарать. Иккĕшĕ те агонистикăпа çыхăннă. Çын пĕрмаях тепĕринпе тупăшать. Çапах та «шурă кĕвĕçӳллĕ» экономика тупăшлăрах. «Хура кĕвĕçӳ» йăлтах пĕтерет. Инквизици вăхăтĕнче хура кĕвĕçӳ чи лайăх çынсене пĕтернĕ. Тĕнчере кĕвĕçӳ кăна тăрса юлнă теме те пулать. Çавăнпа та халĕ çынсене пурăнма йывăртарах. Мĕншĕн тесен, тĕрĕссипе, ырă конкурентлă вăйсем кăна мар, кĕвĕçӳллĕ вăйсем те хутшăнаççĕ. Укçасăр экономика кĕвĕçӳлĕхе йăлтах пĕтермелле пек туйăнать.

Çут çанталăк çаврисенче нимĕнле усаллăхпа кĕвĕçӳлĕх те çук. Çут çанталăк, сăмах май, нимле ырра та, усала та пĕлмест. Çавра хйне мĕн кирлине кăна тăвать. Çавра хăйне сыхласа хăварасшăн. Çавăнпа та вăл хăйĕн структурине хăйне кирлĕ пек улăштарать. Çаврана чылай вăй пухнă пулсан. нимле тапăну та витерейместь. Вăл хăйне тапăнакан хутлăхпа пĕр пулма тем тĕрлĕ май тупать. Çав тĕрлĕ майсем çавра экономики пулса тăраççĕ те. Çавра экономики пĕр элемент тепĕр элемента улăштарма пултарнипе çыхăннă. Кун пек пулăшнинче нимле тупăш шырани те, пĕр-пĕрне кĕвĕçни те çук. Кунта чи кирли пурнăç туни. Пурте çак пурнăçра пурăнас тесе пурăнаççĕ. Кун пек экономикăна ***пурнăç экономики*** теес килет. Апла, пурнăç тени экономикăшăн чăн-чăн критерий пулса тăмалла пек. Пурнăç пур-тăк – пурте йĕркеллĕ, çителĕклĕ те. Пурнăçран ытла мĕн кирлĕ вара, тейĕр, чăн та. Кунта укçа шырани çук. Пурнăç тăвакан çавра кăна экономика никĕсĕ пулма пултарать. Çук, укçа

мар, пурнăç пулмалла, экономика та пурнăç экономики пулмалла.

Çакăн пек шухăшсем шухăш шайĕнче кăна ан юлччăр тесен, кунта палăртнă мелсемпе мĕн май килнĕ таран усă курмалла. Çынна пулăшмалла, ырă тумалла, çывăхланмалла, тепĕр чух тепĕр çыншăн пурлăхна та хĕрхенмелле мар. Кун пек тума пĕрре те йывăр мар. Кашни кун çапла тусан çын усăлса каять. Унăн ырă мар енĕсем хăйсем тĕллĕнех çухалаççĕ. Ку темле идеал та мар. Ку кулленхи пурнăç пулса тăмалла. Çавна ыйтать укçасăр экономика. Ун чухне вара çын кăна мар, çут çанталăк та усăлса кайĕ. Вăл чăнласах ăслăланĕ, чунланĕ, хитреленĕ. Çут çанталăк çаврисем те тасалса вăйланса çитĕç те çынна пулăшма пуçлĕç. Ку пĕр вĕçĕмсĕр ĕçлев. Кунта чикĕ çук. Мĕн чухлĕ лайăхрах – çавăн чухлĕ лайăхрах килсе тухать.

Çавăнпа та пĕтĕмлетсе çапла та калас килет. Çакă çутă та таса тĕнчере сана пĕр пус укçа памасан та эс ĕçлеме тивĕçлĕ. Мĕншĕн тесен эсĕ çапла тусассăн тĕнче хăй те татах çуталса каять. Чăнласа çутă çын пулас тесен, кашнин тепĕр çынна пĕр пус илмесĕр ĕçлесе пама трăшмалла. Çавăн чухне анчах ку тĕнчере тупăш е услам шыракан экономика хăйех хăй вăйне çухатать.

Кунта эпир экономикăн тĕрлĕ енĕсене пăхса тухрăмăр. Кашни мелĕн лайăх тата япăх енĕсем пур. Кирек мĕнле пулсан та пирĕн урăхла альтернатива çук. Енчен те эпир тупăш хăваласа татах та хытăрах ĕçлеме пуçлатпăр-тăк, тӳрех калас пулать, пире катастрофа кĕтет. Çавăнпа та çăлăнăç çулĕ укçа çулĕ мар, кăна çирĕпех татса калама пулать, çăлăнăç çулĕ вăл пурнăç çулĕ. Пурнăç тенĕ ăнлав ытти пур мелсене те пĕтĕмлетет. Пурăнас текен çын укçа пухса пуяс тесе лармасть, вăл пачах урăхла,

вăй-халĕ те укçи те пур пулсан, халăхшăн мĕн те пулин тума тăрăшать. Акă вăл – чăн çул. Хăвна кăна мар, халăха та лайăх пултăр. Çавăн чухне кăна ***халăх экономики хуçаланма пуçлать. Халăх экономики, акă вăл чăн çăлăнăç çулĕ.*** Кун пек шутласан халăх экономики пурнăç критерине те шута илет. Апла, ку тĕрĕсех пулсан, пирĕн каллех халăха упракан, çынна çывăхлатакан ĕç формисем çине куçас пулать. Кашни хăй тĕллĕн пурăнни кун-та çителĕксĕр пек туйăнать. Пĕтĕм обществăна пыр-са тивекен ĕçсен мала тухса тăмалла. Вĕсене вара пĕччĕн пĕр вăйпа тăваймăн. Кунта халăха пĕрлештерни кирлĕ. Экономика, пĕр сăмахпа кала-сан, халăх валли, халăхшăн тата халăхпа пĕрле пулмалла. Кам халăхшăн тăрăшать, çавă чăн эко-номист. Кам хăйшĕн кăна ĕçлет – вăл пĕтĕм тĕнчене пĕтерет. Çапла шухăшсем çуралаççĕ укçасăр экономика пирки шутланă чух. ***Пĕр сăмахпа кала-сан, пире халăх экономики кирлĕ.***

## 2.3. Экоçурт

Çĕр çинче пурăнакан кашни чĕрчунăн хăйĕн килĕ пур. Мĕн-ха вăл кил? Кил, пирĕн шутпа, эко-логи хутлăхĕнчен пуçланать. Нимле чĕрĕ организм та хăй тĕллĕн пурăнаймасть. Пурăнма ăна экохут-лăх кирлĕ. Мĕн чухлĕ лайăхрах çав экохутлăхра пурăнма вĕренетĕн, çавăн чухлĕ сывлăхлăрах та вăйлăрах пулатăн. Чи аталаннă чĕрĕ организмсем хăйсен хутлăхне хăйсем тăваççĕ. Çавă хутлăха кил теме пулать. Апла, чĕрчун хăйĕн хутлăхне хăнăхать кăна мар, ăна аталантарать те. Çын мĕн авалтан хăйĕн килне çут çанталăк пулăмĕсемпе усă курса тунă. Малтанлăха вĕсен килĕ сăрт-ту шăтăкĕсенче, каярахпа йывăçпа курăкран тунă хӳшĕсем пулнă пу-

лать. Унсăр пуçне, паллă, хăй килне вăл хăй çинчех йăтса çӳренĕ. Унăн ӳчĕ çăмлă, организмĕ пиçĕ пулнă. Çут çанталăка пăхăнтарма вĕренсе пынăçем вăл ытти чĕрчунсен тирĕсемпе, çăмĕ-тĕкĕсемпе те усă курма вĕренсе çитнĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, çын килĕ мĕн ĕлĕкрен экоçурт пулнă. Аслăлатса каласан, унăн çурчĕ пĕтĕм планета пулнă, вăл пур çĕре те çитнĕ, планета тăрăх сарăлнă.

Хальхи вăхăтри кил пирки калаçас пулсан, тӳрех курăнать, хальхи çын çурчĕсем экохутлăхран чылай уйăрăлса тăраççĕ. Вĕсенче экохутлăхран уйрăм климат туса хунă. Хальхи хăтлă пӳлĕмсенче пурăнакан çын çавна пула çемçелсех кайнă. Вăл хăй хутлăхĕнчен уйрăлнă кăна мар, вăл халĕ унта тек пурăнаймасть те ĕнтĕ. Ăна пурăнмалăх ятарлă çурт кирлĕ. Мĕнле çурт пулмалли пирки пирĕн те шутламалла пек. Мĕншĕн тесен, экохутлăхран уйăрăлса кайнă çын хăйĕн çурчĕпе мĕн те пулин пулсан, тӳрех е шăнса, е пиçсе вилет. Сăмахран, хальхи çурта хĕлле ăшăтма пăрахсан, çын нумай пурăнаймасть – шăнса вилет. Ку, паллă, хальхи кил çут çанталăкран уйрăм тăнине пĕлтерет. Ăна экологизацилес тесен, каллех çут çанталăк пулăмĕсемпе усă курма вĕренмелле пуль. Пирĕн шутпа, киле çĕртен уйăрма юрамасть. Экоçурт çинчен калаçатпăр пулсан, вăл çĕрĕн пĕр пайĕ пулмалла, унран нимпех те уйăрăлса тăмалла мар. Çав вăхăтрах çыннăн хăйĕн пиçĕлĕхне те ӳстермелле пек туйăнать.

Экоçурта çĕртен, шывран, сывлăшран, вутран тумалла пек. Çак пулăмлă япаласене, паллах, улăштармалла, вĕсемпе усă курма вĕренмелле. Çурта экохутлăхран тумалла тенине пĕлтерет ку. Апла, экохутлăхне те çынна юрăхлă тумалла. Мĕншĕн тесен çын хăй хутлăхĕнчен хальлĕхе ниепле те хăтăлаймасть. Енчен те эпир çынна юрăхлă мар хутлă-

ха лекрĕмĕр пулсан, паллă, çав хутлăхран уйăрăлмалла пулать. Кун пек чухне экоçурт çинчен каласма май çук. Пачах урăхла, унран уйăракан çурт лартас пулать. Хальхи çуртсем çак çулпа кайнă тесен те юрать. Пирĕн шутпа, çуртсене экохутлăхпа килĕшӳллĕн тумалла. Çавăн чухне кăна çын хăйне упраса хăварма пултарать. Упраса кăна мар, вăл экохутлăхпа килĕшӳллĕн аталанса, вăйлăрах та, çирĕпрех пулса тăрать. Вăл вара чăн-чăн экоçын пулса тăрать. Çăлăнăç çулĕ пире çакăнта кăна курăнать. Çăлăнăç çулĕ çут çанталăкран уйрăлнинче мар, çут çанталăкпа пĕрле пулнинче пек. Ун пек тăвас тесен çут çанталăк пулăмĕсене тата япалисене питĕ пĕлмелле, вĕсемпе усă курма вĕренмелле. Космоса тухас тăвас пулсан та пирĕн çав çут çанталăка космос карапĕпе пĕрле илсе кайма тивет. Унсăрăн çын вилет. Çапла шутласа кайсан, хамăрăн экоçурт çинчен шутлама тивет.

Экоçурт çĕр çинчи стихийăсенчен уйрăм тăмалла мар, тĕрĕссипе, вăл çав стихийăсенченех тăмалла. Сăнарласа каласан унта çĕрĕ те çуртлантăр, шывĕ те хумхантăр, çилĕ те вĕртĕр, вучĕ те çунтăр. Вăл, апла, хăй пĕр организм пулмалла. Вăл хăй пĕр пĕчĕк çĕр чăмăрĕ пек курăнмалла, пур пулăма та чăмăртаса тăмалла. Сăмахран, ун стенисем çĕртен те, шывран та, йывăçран та, сывлăшран та пулмалла. Ку мĕнле вара тесен, пирĕн темле хăйне хăй пăхса тăракан çурт-организм тума вĕренмелле. Тĕслĕхрен, çурта тумалли материалăн шăтăклă пулмалла. Ун пек материалсем халь нумай. Вĕсем çĕрпе сывлăша пĕрлештереççĕ. Ун пек çурт сывлать, теççĕ (çил вĕрет). Çĕрпе çурт пĕрле сывлатчĕр тесен, пирĕн çĕр сывлăшĕпе, ун ăшшипе усă курма тытăнмалла. Çĕр ăшĕнче шывĕ те, вучĕ те пур. Хальлĕхе ун пек системăсем пур пулсан та эпир

темшĕн вĕсемпе усă курмастпăр. Мĕншĕнни паллă, эпир экоçурт çинчен шутламастпăр. Чăн та, çĕр ăшĕнчен кăларнă шыв çурта ăшăтма та, сивĕтме те пултарать. Кунта, тен, кăштах электричество вăйĕ кăна кирлĕ. Электричествăна термăпарăсенчен, хĕвел çутинчен, е çил вăйĕнчен илме пулать. Йывăçпа усă курни çурта çынна çывăхрах тăвать, йывăçа шалтан илемлетме ярас пулать. Паллах, питĕ фантализенсе шутласан, пĕтĕм стена-маччасене хăй хальлĕн ӳсекен йывăçсенчен те тума пулать. Ку вăл йывăç çурт пулать. Анчах та ун пек тума вĕренес тесен, малтан хамăра кирлĕ хурăмлă йывăçа ӳстермелле. Ун пек тума хальлĕхе никам та пĕлмест. Тен, кунта ку ĕçе тытса пăхманни кăна пĕтерет. Модельсем нумай. Экоçурт тăвас текенсем те сахал мар.

Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, çăлăнăç философийĕ пирки шутласа кайсан, чăваш çурчĕ питĕ хăйне майлă курăнмалла пек. Чăвашăн чăн пурнăçĕ хăйĕн килĕпе çыхăннă. Çавăнпа кашни чăвашăн – хулара пурăнать-и вăл е ялта – хăйĕн çурчĕ пулмалла. Вăл расна, чăн-чăн экоçурт пек курăнмалла. Çут çанталăкран нмпех те уйăрălса тăмалла мар пек туйăнать вăл. ***Экоçурт пулсан чăваш та пур, ялĕ те пур, халăхĕ те пулать. Экоçурт уншăн çăлăнăç карапĕ пек курăнса лартăр. Çав çурт унăн хуçалăх никĕсĕ пултăр.*** Унтах апат-çимĕçне те туса илмелле пултăр, культура ыйтăвĕсене те тивĕçтерме май килтĕр. Çапла пăхсан чăвашăн çăлăнăç çулĕ уçăмлăрах пек курăнса каять. Чăн та, чăваш мĕншĕн халь те пур тесе ыйтсан, тӳрех калама пулать, ***унăн чăваш çурчĕ пур***. Чăваш килĕ хăй пĕр космос карапĕ. Унта унăн мĕн пурăнмалли йăлтах пур. Пахча-çимĕçĕ те, кайăк-кĕшĕкĕ те, выльăх-чĕрлĕхĕ те, улми-çырли те, тырри-пулли те, хурт-хăмăрĕ те, чечекĕ-мĕнĕ те. Хуçа кунта пурне те

çыхăнтарса çавăрттарса тăрать. Унăн шывĕ те, вутти те, ани те, сывлăшĕ те пур. Пурте пур унăн. Анчах та çак туса тултарнă хăтлăха пурне те экологи енне сулăнтарас пулать. Ун чухне кăна вăл çут çанталăкпа туслашма пултарать. Унăн çилне те, шывне те, анине те пурне те çавăрттармалла. Экоçурт пур енĕпе те çут çанталăкпа çыхăннă, унран уйăрăлса тăмасть. Хальлĕхе ку çуккă-ха. Чăваш хальлĕхе хăй патша мар-ха. Çирĕпрех каласан, унăн çурчĕ хăй пĕр карап пулмалла. Вăл йăлтах хăй тĕллĕн пурăнма пултаракан пĕр организм пек курăнмалла. Ун чухне тин эпир çăлăнтăмăр, пирĕн халь хвмăрăн çурт пур, эпир халь тин пĕтместпĕр тесе калама пулать. Акăльчансем «манăн çурт – манăн крепость» тенĕ пулсан, ***чăвашсен «манăн çурт – манăн çут çанталăк» темелле пуль.*** Кунта шутламалли нумай. Чăн малтан, çурт сана çак тĕнчепе çыхăнтарса тăнине ăнланса илмелле. Эсĕ, чăн хуçа пулсан, хăвăн хуçалăхна йĕркелетĕн, унта вара пурăнмалăх мĕн кирлĕ – сан йăлт пур, çав хуçалăх никĕсĕнче экоçурт ларать. Вăл хăй пĕр çут çанталăк.

Çав çурта, паллах, пĕтĕм культура çитĕнĕвĕсемпе пуянлатмалла. Вăл, халь, электронлă çурт пулмалла. Автоматика меслечĕсем кунта никам сисмелле мар, хăй тĕллĕнех тенĕ пек ĕçлемелле. Урăхла каласан, çурт информаци тытăмлă пулмалла. Кирек мĕнле организм та информаци пулăмĕсем çинче тытăнса тăрать. Кунта та çавах. Çурт ăслă, чунлă система пек ĕçлемелле. Çынна мĕн кирлĕ, çавна туса тăмалла пек туйăнать. ***Ун чухне кăна вăл экоçурт кăна мар, вăл вара чăнласах инфоçурт пулса тăрать.***

Инфоçурт чĕрĕ пекех курăнать. Унта алăкĕ-чўречи те, ăшши те, шывĕ те, сывлăшĕ те хăй

тĕллĕнех улшăнса йĕркеленсе тăрать. Кун пек чухне çуртри кашни япала çын мĕн тăвассине кĕтсех тăрать тейĕн. Çутă çутмалла-и унта, радио-телевизор ямалла, компьюторпа ĕçлемелле – пурне те хатĕрлесе хунă, пурте хатĕрленсе тăрать. Çывăрнă чухне те, ирпе çывăрса тăнă чухне те тем тĕрлĕ программа хатĕрлесе электронлă хатĕрсем çын мĕн ыйтнине тăваççĕ, çывăрттараççĕ, вăратаççĕ, апат та хатĕрлесе пама, кайран чашăк-тирĕксене çуса хума пултараççĕ. Кил-çурта пуçтарасси тата кĕпе-тумтир çăвасси те çавах. Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, инфоçурта пĕтĕмпех электификациленĕ, информациленĕ, пур çĕрте те автоматсем ĕçлеççĕ. Ку, паллах, пурнăçа çăмăллатать. Çын хăйне кăна интереслентерекен ĕçпе нумайрах ларма пултарать. Унăн сывлăхне те, тĕрĕссипе, автоматсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Ун пек приборсем халĕ çук мар.

Кунта пăхса тухнă мелсем экоçуртпа хăйĕнпе кăна çыхăннă тейĕпĕр. Анчах та, каларăмăр, экоçурт хăйĕн калăпăшĕпе пĕтĕм тавралăха ярса илет, ăна хăй тавра çавăрттарать. Апла, пирĕн экохутлăха та электрофикацилесе информацилемелле пулать. Çурт ларакан хутлăха пĕрмаях тĕпчесе сăнаса тăмалла. Мĕн те пулин пăсăлнă пулсан, часрах ăна юсама тытăнмалла. Кун пек тăвас тесен, экохутлăха пур çĕре те датчиксем лартса тухмалла. Вĕсен кăтартăвĕсене шута илсе, малала мĕн тумаллине компьтерсен кăтартсах тăмалла. Ку хăй питĕ пысăк задача. Кăна хальлĕхе хăш-пĕр биологи сăнав станцисенче кăна тунă. Çапах та кун пек ĕçсене кашни хуçа тума пултарать. Анчах та, асăрхăр, ун пек тума питĕ пысăк пĕлӳ кирлĕ. Ялта пурăнас тесен, биолог та, электрик та, философ та пулмалла. Копьютерпа ĕçлеме пĕллмелли пирки калаçмастпăр та. Ял ĕçченĕ тĕнчешĕн яваплă. Вăл мĕнле

ěçленинчен тем те килет. Мěншěн тесен вăл хăй пěр экохутлăха тытса тăрать. Çурчě те унăн хăй пěр космос карапě, терěмěр. Вăл нимле çил-тăвăл килсе çапсан та, темле кризис пуçлансан та нимрен те хăрамасть. Мěншěн тесен ***экохуçа*** йăлтах хăй тěллěн пурăнать. Унăн мěн пурăнмалли пурте пур, тулашпа вăл кăшт çеç çыхăннă. Паллă ěнтě, обществосăр пурăнма май çук. Çапах та питě кирлě-тěк, ăна никам та кирлě мар. Вăл хăй пěр Турă пек пурăнать. Унăн хăйěн тěнчи пур. Çавăнта вăл хăй пěр хуçа, хăй пěр патша. Çавăнпа мар-и вара чăваша – вăл хăй питě пěр талай тенě. Талай (талион) тени авалхи сăмах, пур япалана та хăй татса пама тăрăшать тенине пěлтерет.

Кунта экохуçа хăй тěллěн пурăнать тенине вăл çут çанталăкпа пěрле пурăнать тенě пек ăнланмалла. Унăн пур вăйě те стихийăсен вăйěсемпе çыхăннă. Вěсемпе вăл мěн чухлě усă курма пултарать, çавăн чухлě вăйлă.કаларăмăр, вěсемпе усă курас тесен питě пысăк пěлӳллě пулмалла. Экоçурт хăй тавра нумай пěлěве пуçтарать. Анчах хальлěхе ял ěçченě пит нумаях та пěлмест. Мěншěн тесен ял-хуçалăх ěçне заводсенчи пекех тěрлě пая пайласа пěтернě пулнă. Мěн калан, пěри выльăх пăхнă, тепри тырпул акнă, виççěмěш çурт тунă т.ыт.те. Ку тěрěс мар çул пулнине халě пурте пěлеççě. Хуçа тинех хăй хуçалăхěпе пурăнма пуçлать. Çав хуçалăх питě пěрлěхлě. Унта кашни япала тепěринпе çыхăннă. Синергетика мелěсене пěлмесен унта нимех те тăваймăн. Çавăнпа та экохуçалăха тытса тăракан çыннăн тем тěрлě специалист кăна мар, унăн, чăн та, филосф та пулма тивет.

Экоçурта тунă чухне те, тытса тата аталантарса пынă чухне пысăк философ пулма кирлě пирки ятарласа каласа хăварас килет. Халь мěн,

халь кашни çын: «Мана юрать», – тет. Халь тин ун пек калама юрамасть. Мĕн-ма тесен, сан çинче пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм халăх пăхать – вĕсемшĕн эсĕ кăна яваплă. Пĕр-пĕр çавра чарăнса ларсан ытти çаврасем çаврăнма пăрахаççĕ. Каларăмăр, çĕр ĕçĕнче пурте пуринпе çыхăннă, уйрăлми пĕрлĕх. Çав пĕрлĕх варринче экохуçа тăрать. Вăл мĕнле – çаври те çапла. Çын çавăрттарать. Çав вăхăтрах, çӳлерех каланăччĕ, çын пур çĕре те ĕлкĕрет, кашни ĕçе хускатать, вăйлатать, аталантарать. Вăл экоçурт хуçи, хăйĕн хуçалăхне никама та шанса пама пултараймасть. Ку питĕ принциплă япала. Енчен те вăл ку ĕçе аллинчен вĕçертрĕ пулсан, тĕнче те тӳрех вĕçерĕнет. Вăл вара пăсăлма тытăнать. Халĕ эпир çавна куратпăр та. Мĕншĕн тесен çын хăй яваплăхне çухатнă. Маншăн пулсан пурпĕрех, тет. Çĕр пирки ыйтсан, çĕр мана укçа парсан та кирлĕ мар, тет. Халь тин çĕнĕ хуçасем çĕре çавăрттарса ярайман пирки, пире ку çĕр кирлĕ мар тесе заявленисем çыраççĕ. Ара, налукне те тӳлемелле, ĕçне те тума вăйпа пĕлӳ кирлĕ. Вĕсем вара çукрах.

Экоçурт илемĕ пирки те калаçма тивет. Туллин çавăрттарса янă çавра, пирĕн шутпа, калама çук хитреленсе каять. Кам пĕлмест пултăр, панулмисем таса та тутлă, помидорсем, хăярсем йăтăнса пулаççĕ-тĕк, тырри-пулли тата выльăх-чĕрлĕхĕ тăрантаççĕ кăна мар, тупăш та кӳреççĕ пулсан, мĕнле ан хитрелентĕр ку тĕнче. Çын чунĕ те хитреленет. Çут çанталăк патне ырăпа кăна пыракан çын патне те çут çанталăк ырăпа кăна пырать. Çын хутшăнăвĕсем те, ырра кăна кĕтеççĕ те-ха, лайăхланса çăмăлланса каяççĕ. Тахçан çĕр çинче çăтмах пулнă теççĕ. ***Экоçурт хăй пĕр çăтмах пулса тăрать.*** Унти çут çанталăкĕ хăй пĕр Турă, хуçи хăй пĕр Адам. Кун пек кил-çурт йăлт чечек, сад ăшĕнче лармалла

пек туйăнать. Чечек хăй хитрелĕхĕпе пысăк вăй парать. Çынсен чунĕсем чечекленсех кайĕç.

Экоçуртра пурăнакан çын пурнăçĕ пирки эпир тепĕр главара калаçăпăр, халĕ вара, пĕтĕмлетсе, экоçын пурнăçне никĕслесе тăракан экохуçалăх çинчен çапла каласа хăварас пулать. Ку хуçалăх таçта малашлăхра мар. Кун пек хуçалăх пуçламăшĕсем хальхи пурнăçра та пур. Кашни ялтах, сăнасарах пăхăр-ха, пĕрисен хуçалăхĕсем ешерсе чечекленсе тăраççĕ, теприсен йăлт юхăнса кайнă. Мĕне пĕлтерет ку тесен, паллă, хуçа хăй хуçалăхне çавăрттарса яма пултарнă. Калас пулать, çут çанталăк çак ĕçе пĕрре те хирĕç тăмасть, общество та хирĕçлемест – пачах урăхла – ĕçлеме пуçлатăн кăна çут çанталăкĕ те, ăна пĕлсе тăрсан ĕнтĕ, çынни те – пурте пулăшма тытăнаççĕ. Анчах, каларăмăр, кун пек хуçалăхсем çапах та çукрах-ха. Эпир шутланă тăрăх, ку пирĕн малашлăх. Ялта ĕç çук, хулана каятăп тесе лармалла мар. Ялта ĕç вĕçĕ-хĕррисĕр, тата ахаль ĕç те мар вăл – вăл Турă ĕçĕ. Кам та кам çут çанталăкпа пĕр пулса, хăйĕн экохуçалăхне çавăрттарса экоçурт лартма пултарать, çавă тӳрех малашлăхра хăйне çутă та вăйлă, асапăчаллă та телейлĕ курать. Ку малашлăх, паллă, çемье малашлăхĕ. Халь тин çак пулăмсем çинчен калаçма пуçлăпăр.

## 3. Глава. Экоçын

### 3.1. Экоçынпа çут çанталăк çыхăнăвĕ

Çынпа çут çанталăк çыхăнăвĕ тĕрлĕ шайра пулса иртет. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, ку çыхăну питĕ конкретлă. Экоçын кашни япалана тытса пăхать, кашни пулăма хутшăнать. Пĕр-ик сăмахпа каласан, вăл хĕвелпе тăрать, çилпе пĕрле чупать, хĕвелпе çывăрма выртать. Экоçын пурнăçĕ çут çанталăк пурнăçĕнчен уйăрăлса тăмасть. Çут çанталăкне эпир кунта çаврасен пуххи пек ăнланатпăр. Вăл çаврасене кăна мар çавăрттарать, çавра ăна хăйне те чуптар-калаттарать. Çав чупу çынна урăхлатать, ăна яка-тать, яаваплăха туйма вĕрентет. Калăпăр, выльăх-чĕрлĕх пăхакан çын нихăçан та хăй çинчен çеç шутламасть. Унăн шухăшĕ, чăн малтан, выльăхсем çинче. Вĕсем мĕнле пурăнаççĕ-ши, тет вăл. Апла, ку çын пачах урăх çын. Ку вăл – экоçын. Ăна, чăн малтан, çут çанталăк пулăмĕсем тата хуçалăх епле тăни интереслентерет. Çанталăкĕ мĕнлерех, кил-терĕш çирĕп-и, хуçалăх тĕрĕс-тĕкĕл-и, шутлать вăл. Апла, экоçын çак тĕнчепе кашни япала, кашни пулăм ур-лă çыхăнать. Вăл пĕр вĕçĕмсĕр пăшăрханать. Ун пăшăрханăвĕнче темле çутлăх пур. Мĕншĕн тесен вăл кашни пулăма çут çанталăк урлă хăй пĕлнĕ пек курса тăрать. Экоçын пуçĕнче яланах темле хăйне кăна илентерекен ӳкерчĕк (модель) пур. Çавна мĕнле те пулин пурнăçлас тесе ĕçлет вăл. Моделĕ паллă – вăл çавра. Çут çанталăка хăйне кирлĕ пек çавăрса яма пултарсан вара тин çын çут çанталăкпа тачă çыхăннă тесе калама пулать. Унсă-рăн, каларăмăр, çавра талнă пулсан ĕнтĕ, кĕтсех тăр, мĕнле те пулин инкек пырса çапать.

Çут çанталăкпа çыхăнни, апла, çаврапа çыхăнни, ăна çавăрттарни. Хальлĕхе çын çавра енне туртăнать пулин те, хăй мĕн тунине ăнлансах илеймест. Мĕншĕн тесен вăл çав çавран пĕр пайĕпе кăна ĕçлет. Çаврана пĕтĕмĕшле курмасть. Çавăнпа та ăна, вăл çаврапа, апла пулсан, çут çанталăкпа япăх çыхăннă тесен те тĕрĕс. Çакна пирĕн питĕ тĕплĕ ăнланса илмелле. Унсăрăн малалла каясси пулмасть пек туйăнать. Кашни хуçан хăйĕн çаври пулмалла. Малтанрах каларăмăр, çав çавран пĕр пайĕ кăна çухалтăр, çавра тӳрех ванма тата талма тытăнать. Хальлĕхе тулли пĕр çавра та çук. Вĕсем пурте аран-аран çаврăнкалаççĕ. Çавăнпа та нимле тупăш та кӳмеççĕ. Çавăнпа мар-и вара чăваш çемйи те аран-аран пурăнкалать. Лайăх пурăнакансем те çук мар, паллах. Çапах та, калас пулать, вĕсем çавра çавăрса янипе те мар, вĕсем патшалăх çаври çумне çыпçăннипе кăна вăйлă курăнаççĕ. Патшалăхĕ те пирĕн тахçанхи авалхи çаврасен вăйĕпе усă курса, çут çанталăк хатĕрлесе хунă япаласене сутса кăна вăйлăн курăнать. Унăн хальхи вăхăтра çаврăнакан çаврасем çукрах. Пирĕн ĕç вара, пачах урăхла, пирĕн çав çаврасене çавăрттарса ямалла. Çавă пулать те пирĕн çут çанталăкпа чăнласа çыхăнни.

Кун пек тăвас тесен пирĕн çав çавра-модельсене питĕ лайăх пĕлмелле. Вĕсем çинчен мĕн пĕчĕкрен калаçма тытăнмалла, шкулта вĕрентмелле, тата хăвăн тытса пăхмалла. Ку ĕçсем пĕрре те çăмăл мар, кунта пĕлмелли питĕ нумай. Хальхи вăхтри наука кун пирки нимех те калаймасть-ха. Апла, ку ĕçе тума кашнин хăйĕн ăсĕ кирлĕ. Ăсне таçтан мар, çут çанталăкранах илмелле. Çавра тени хăй ăслă. Вăл хăйне мĕн кирлине ыйтсах тăрать. Эпир пĕлменни, сисменни, пăшăрхануллă пулманни кăна

пире пĕтерет. Ахальтен тенĕ пек кăна калатăп, выльăха апатсăр хăвараймастăн вĕт-ха, кашни каçах пахча-çимĕçне шăваратăн вĕт-ха т.ыт.те.

Çавра, тĕрĕссипе, кашни самантрах тенĕ пек талса пырать, апла, пирĕн ăна çав самантрах тенĕ пек сыпăнтарса çавăрттарса тăмалла. Мĕншĕн талать тесен, паллă, пирĕн çаврасем вĕсем хуçалăх çаврисем. Мĕнле калаççĕ-ха: «Пĕрне тунă çĕре тепĕри çĕрсех пырать». Экоçын, эпир халь çав пăшăрхануллă çын пирки калаçатпăр, çут çанталăкпа çавра сыпăкĕсене юсаса лайăхлатса тăнă чух çыхăнать. Ку лайăх. Анчах çителĕксĕр. Экоçыннăн, экохутлăх тăвать те-ха вăл, хăйĕн çаврине хăй тĕллĕнех çаврăнса каймалла тумалла. Кун пекки вара пур-и, тесе те ыйтма пулать. Пур ун пек çаврасем. Вĕсем çын пырса тĕкĕнмен çут çанталăк çаврисем. Кун пек çаврасем хăйсем тĕллĕнех çаврăнаççĕ. Тепĕр чух пĕтерес тесен те пĕтерéймĕн. Тĕслĕхрен, çум курăк çаврисем калама çук çирĕп. Çум курăкне тем чухлĕ пĕтерес тесен те пĕтерейместĕн. Тен, пĕтерме те кирлĕ мар. Ăслăрах пулсан вăл çаврасене те пирĕн çаврана пулăшса тăмалла çавăрттарса ямалла та, анчах эпир ун пек тума пĕлместпĕр. Пĕлсех çитмен тени тĕрĕсрех пуль. ***Халĕ биологи меслечĕсемпе вăйлăрах усă курма пуçларĕç. Хуçалăх çаврисене те çын пырса тĕкĕнмен çаврасем пек çавăрттарса ярас теççĕ. Ку, пирĕн шутпа, тĕрĕс çул. Ку – çăлăнăç çулĕ.*** Кунта мĕн каламалли пултăр, хуçалăх çаврисем вĕсем, ытти çаврасенчен уйрăмрах тăраççĕ çав. Çавăнпа та çут çанталăк вĕсене пĕтересшĕн, хăйĕнне кăна хăварасшăн. Пирĕн вара тĕрлĕ мелсемпе усă курса хуçалăх çаврине те çавăрттармалла. Чи кирли кунта вĕсене çывăхлатнинче те мар, чи кирли кунта хамăра кăна кирлĕ экохутлăх туса хунинче. Çав экохутлăх вара

хăй тĕллĕнех, пĕр-пĕр организм пек пурăнма пултарать. Хăй тĕллĕнех çаврăнать. Анчах та, каларăмăр, кунта малтанрах туса хунă çут çанталăк хутлăхĕ те пур вĕт-ха. Вăл та организм, вăл та пурăнасшăн. Апла, вĕсем пĕри тепĕринпе кĕрешеççĕ пулать-и-ха. Кунта тем урăхла шутламалла пек туйăнать.

Пирĕн шутпа, çутçанталăк çаврисен хуçалăх çаврисене пулăшса тăмалла пек. Çук, вĕсене пĕтермелле мар, вĕсен çаврине пирĕн çаврасем енне çавăрса ямалла. Сăмахран, çум курăкĕ тухтăр вăл, тухтăр та сидерат пулса тăтăр. Вăл çĕр айĕнчен ӳсен-тăрана кирлĕ минералсем кăна мар кăларса тăрать, вăл хĕвел çутипе усă курса çĕр пулăхне ӳстерет – тислĕк пулать. Акă ăçта иккен çум курăк вăйĕ – вăл хуçалăха питĕ пулăшать. Унпа кĕрешмелле мар, унпа усă курма вĕренмелле. Ытти çаврасем пирки те çавнах каламалла. Апла, çут çанталăкри мĕнле çаврасем пур, вĕсем пурте усăллă, кирлĕ те. Калаçу кунта тупăшу пирки пымасть, кунта пĕрне-пĕри пулăшни пирки калаçмала. Ку хутшăнусене çапла курма вĕренсен кăна, хуçалăх çаври те хăй тĕллĕнех çаврăнса каять.

Кун пек чухне экохутлăх пирки те калаçма пулать. Экохутлăх, каларăмăр, вăл çаврасен пуххи. Хăй пĕр пысăк система. Вăл, халь пĕлетпĕр, хăй тĕллĕнех пурăнма пултарать. Экоçын, паллă, çав экохутлăхпа пĕрлĕхлĕ, унтан пĕр уйăрăлми пурăнать. Çут çанталăка та вăл, паллă, урăхла курать. Ку курăну питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çавăн чухне кăна çын хăйне чăн çын пек туять пек. Экоçын ку экохутлăха пĕтĕм чун-чĕререн, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе туять. ***Чăн та, акă, хуça хăйĕн экохутлăхне ир енне тухрĕ тейĕпĕр. Вăл тĕнче еплерех ешерсе юрласа тăнине курать вĕт. Çак ирхи çул çăлăнăç çулĕ мар-и вăл, çакăн çинчен те шутламалла мар-и.*** Ирпе çӳл

тӳпере тăри хорĕ шарлаттарса ярсан, чун таçта кайса кĕрет. Ăшă çил пите ачашласа вĕрет. Юхан шыв урлă каçма тăратăн та, пит-куçа таса та шăнкăр-шăнкăр шывпа çуса илмесĕр чăтаймастăн. Вăл сана тата хытăрах уçăлтарса ярать. Ун пек чухне хăвна чăнласах телейлĕ туятăн. Çын тени вăл тĕнчене телей курма çуралмасть-и вара. Хăвăн кĕлеткене çăмăллăн та вăйлăн йăтса пыратăн, Тем те пĕр тытса тăвас килет. Кунĕпе ĕçлесе ывăннă хыççăн каçхи сада тухсан вара хăвна турă пекех туятăн. Чечексен тутлă-тутлă шăршисем пуçа анраттсах яраççĕ. Шăпчăксем каçса кайса юрлаççĕ. Тӳпене çут çăлтăрсем тухаççĕ. Кун пек чухне чун каçăхсах каять. Çак тĕнчере пурăннăшăн савăнатăн. Сан пурте йăркеллĕ, пурте лайăх пиçет, çитĕнет, аталанать. Çакăн пек самантсем мар-и вара çăлăнăç çулне кăтартса параççĕ. Хуçалăхри кашни япала эс тĕрĕс çулпа утнине ĕнентерсе парать. Кун пек пурăнсан ăраскаллă пулассине ăнланса илетĕн. Тулли пурнăç çаврисем туллин çаврăннипе çыхăннине пĕтĕм чунран ĕненетĕн. Çаврасем сана нихăçан та пăрахмĕç, эсĕ те вĕсене нихăçан та пăрахмăн. Çак ĕненӳ чуна кĕрсе ларать те сана малалла пурнăç тăрăх илсе каять. Çапла шутласа–туйса пурăнатăн пулсан, çаврана пуç çапма пуçламалла мар-и пирĕн. ***Çавра хăй Турă вырăнĕнче çӳресен кăна пĕтĕм юратăвна, пурнăçпа ĕçе çаврана парса хăвăн та турăланма пулать пуль.*** Нимĕçсем тислĕке турă вырăнне хурса пуç çапаççĕ. Пирĕн çынсем çынран, тислĕкпе танлаштарса, кулаççĕ. Тислĕкрен япăх япала та çук, иккен. Анчах та пĕтĕм çĕр пулăхĕ тислĕкрен килнине ăнланмаççĕ. Çук, ăспа пĕлеççĕ-ха, чунпа вара çук. Çаврасемпе те çавăн пек. Çаврана Турра пуç çапнă пек пуç çапма тытăнсан кăна пурнăç ешерсе аталанса каяссăн туйăнать. Ку, паллах, чăваш пур-

нăçĕшĕн çĕнĕ япала. Çапах та çакă çĕнĕ ĕненĕвĕ пурнăçа кĕртмелле пек туйăнать. Унсăрăн, ку ĕçе эпир ăс шайĕнче кăна алла илеймĕпĕр, чун ĕçлени те кирлĕ. ***Ку ĕненĕве – çавра тĕнĕ теме те пулать.*** Çавăн пек тусан кăна эпир çут çанталăка пăхса лайăхланма тата çут çанталăк пекех шутласа пурăнма вĕренĕпĕр. Чăн та, чун вырăнта мар чухне эпир, чăн малтан, уçăлма тухатпăр мар-и вара. Урамра е пахчара уçăлса çӳренĕ чух пĕтĕм ăш-чик вырăна ларать. Апла, çут çанталăк пире сиплет, вăл пире пулăшасшăн. ***Çакăн пек лайăхлантарнине тĕп социализации теес килет.*** Общество кăна мар, çут çанталăк та социализацилет. Ку питĕ пысăк вăрттăнлăх. Ахальтен мар хула çынни кашни вырсарни кун тенĕ пек дачăна е вăрмана тухать. Унта çут çанталăк хутлăхĕнче хăйĕн чун-чĕрине юсать. Ку пулăмпа пурте усă кураççĕ. Анчах хăйсемпе мĕн пулса иртнине ăнланмаççĕ. Çут çанталăк чиркӳрен те вăйлăрах сиплет. Çут çанталăк вăл хăй пĕр чиркӳ. Хăй пĕр Турă. Кунта, халь тин чылай вăхăт хушши çаврасем çинчен ăнлантарнă хыççăн, пĕр иккĕлнӳ те çук. Çăлăнăç çулĕ çине ӳкес тесен хула çыннин те çут çанталăкпа хытăрах çыхăнма пуçламалла. Мĕншĕн тесен хула çынни те çут çанталăк вăйĕпе пурăнать. Хулари заводсенче те çут çанталăк. Унта та, каларăмăр, çаврасем çаврăнаççĕ. Çаврăнса çитменнисем пирĕн пурнăçа пăсаççĕ. Кунта та çав çаврасене туллин пире кирлĕ пек çавăрттарса ярсан чун лайăхланать. Хальлĕхе хула çынни çавна курмасть, ăнланмасть те. Çавна пула мар-и ун чунĕ урăхла курăнать. Вăл темле типĕрех, ăслăрах, ĕçлĕрех те курăнать. Чунĕпе вара хытăрах. Хулари çаврасем вĕт ăна çапла социализацилеççĕ. Ăна, паллă, вăл хăй сисмест. Вăл хăй хулара пурăннăшăн савăнать, Эпĕ, тет, çут çанталăкран та

вăйлăрах. Эпĕ ăна хама мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ парăнтарса, унпа усă курса тăрăп текелет. Анчах та хăй сисмесĕрех çут çанталăкне пĕтернĕçемĕн хăй те пĕтет. ***Апла, ку питĕ пысăк вăрттăнлăх пек курăнать, çаврасем пĕтнĕçем çын та пĕтет. Çын урăхла майпа çут çанталăка хирĕç кайса, тĕрĕс мар социализациленет.*** Хăвăрах шутласа пăхăр-ха, енчен те çын çут çанталăкран кулма тытăнсан мĕн пулать пек.

Пĕр пĕтĕмĕшле каласан, хула çынни кăна мар, ял çынни те халĕ çут çанталăкран талса пырать. Тĕрĕс-и ку, тĕрĕс мар-и, вулаканăн хăйĕн шутламалла пуль. Эпир хамăр ăнланнă тăрăх, çын çут çанталăкпа пĕр пулсан кăна экоçын пулса çитме пултарать пек. Хăш-пĕр философсем «çын вăл тек çут çанталăкпа çыхăнман» тенисем тĕрĕсе килмеççĕ пек туйăнать. Халь тин унпа çыхăнмалли вăхăтсем çитрĕç. Малтанрах уйрăлнисем пĕр пулса çаврăнччĕр. Çут çанталăкĕ те вăл халь тин ĕнтĕ çын тунă çут çанталăк вĕт. Çын утман, кĕмен вырăн çук. Халь пурте çынланнă. Çут çанталăкĕ те вăл çавăнпа çын çут çанталăкĕ. Çын хăйĕн çут çанталăкĕсĕр пурăнма пултараймасть. Апла, унăн ăна питĕ упрамалла. Малалла та çавăрттарса тăмалла. Ку шухăша, пирĕн шутпа, нимпе те хирĕçлеме çук. Мĕншĕн тесен урăхла шутлани вилĕм патне илсе çитерет. Никамăн та пĕтес килмест. Эпир те, акă, çăлăнăç çулĕсене шыратпăр. Çавăнпа та çут çанталăка çавра пек курса тăмалли çинчен, ăна çавăрттарса ярсан кăна çын хăй те пулни çинчен калаçатпăр.

Кунта пĕр япалана каласа хăварас пулать, Енчен те çын çут çанталăка пăхăнтарас тет пулсан, вăл унран уйăрăлать. Енчен те вăл çут çанталăкпа пĕр пулас теет пулсан, вăл ăна пулăшма тытăнать,

аталантарать. Пĕрисем уйрăлсан кăна – çын пулатăн теççĕ. Тепĕрисем – пĕрле пулсан кăна чăнланатăн теççĕ. Хăшĕ тĕрĕс каланипе каламаннине, курăр, çут çанталăк хăй татса парать. Кам та кам çут çанталăка пăхăнтарас тесе хирĕç тăрать, вĕсене вăл çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтать. Кун пек процесс пуçланчĕ тесен те тĕрĕс.

Çавăнпа та пирĕн çут çанталăкпа мĕнлерех çыхăнмалли пирки шутламалла пек туйăнать. Çав çыхăну çаврасем урлă çирĕпленсе пымалла терĕмĕр. Çавра çавăрттаракан кăна çын пулма, тен, çавна пула кăна çăлăнма пултарать пек. Паллах, хальхи пек çĕр çĕмĕрсе пурăнса та вăхăтлăха та пулин упранса кăна мар, пуйса та пурăнма пулать. Çапла тăваççĕ те. Ман хыççăн хăть шыва кайса вилччĕр теççĕ. Эпир ун пек шутламастпăр. Эпир çăлăнăç çулне шыраса çаврасем патне килсе тухрăмăр. Вĕсем урлă хамăр пурнăçа кăна мар, тĕнчене çăласшăн тăрăшатпăр. Эпир вĕт тĕнчепе, тĕнчере, тĕнчешĕн пурăнатпăр. Çавăнпа та ку шухăшсем пĕтĕм тĕнчене пырса тивеççĕ. Апла, пĕтĕм тĕнчене çавра пек курса тăмалла. Ун пек çыхăнуллă çаврана биосфера тесе хакласçĕ. Этемлĕх пурнăçĕ халĕ биосфера хăйне мĕнле тыткаланинчен килет. Вăл вара, кун пирки пĕрре те иккĕленместпĕр, гомеостат пек ĕçлет. Çӳлтерех каларăмăр, вăл гомеостат пек шухăшлама пултарать. Ун пек шухăшлав çук тесе тăма кирлĕ мар. Çĕр-анне пирĕнпе, асăрхăр, катастрофа чĕлхипе калаçать. Ун пек ан тăвăр, унсăрăн сире çупкă çитеретĕп тет. Анчах та çын çавна ăнланмасть. Çаврасене çавăрттарса яма тăрăшмасть. Вăл пĕтĕм биосферăна мĕнле вараланă, çаплипех вараласа пурăнать. Çавăнпа та, паллă, гомеостат хăйĕн тытăмне упраса хăварас тесе, кашни çапла улшăнăва сивлет, катастрофăпа хуравлать. Çапларах ун, Çĕр-

Аннен хуравĕ-реакцийĕ-шухăшлавĕ. ***Биосферăн шухăшлавĕпе чĕлхине ăнланма вăхăт. Унсăрăн, эпир кăна ăслă, тесе ларса юлатпăр. Çак тĕнчере пурте пурăнасшăн, кашнин хăйĕн пурнăçĕ, шухăшлавĕ тата çăлăнăç çулĕ.***

Юлашкинчен тенĕ пек çакна кăна каласа хăварар. Çавра çаврăнса тăтăр тесен, эпир ун урлă çыхăнатпăр пулсан, çут çанталăка, кашни талан сыпăка сыпăнтарсах тăрас пулать. Ун пекки вăл пĕрмаях пулать. Çавăнпа та çут çанталăкпа çыхăнас тесен, çыннăн питĕ сыхă тăмалла, çаврашăн пăшăрханмалла, çавăн чухне кăна эпир çăкăр-тăварлă тата тăнăç пурнăçлă пулатпăр.

## 3.2. Çавра ĕрчетĕвĕ

Халĕ çав çаврасене мĕнле тумалли пирки калаçас килет. Çаврана çын хăй тăвать, хăйех тытса тăрать. Пĕр сăмахпа каласан: ку вăл çын ĕçĕ. Çын хăйĕн ĕçне кирек ăçта та, кирек хăш вăхăтра та пуçлама пултарать. Çавра тăвас тени, çӳлерех каланăччĕ, ĕç тăвас тениех. Пурнăçра вĕт чи кирли – япала туса ăна çын патне çитерни. Япала пултăр тесен, ĕçе çавра йĕркелесе ямалла. Çавăнпа та çавра çавăрттарас тени вăл ĕçе йĕркелес тениех. Кунта вĕсене пĕрне тепĕринчен уйăрма çук. Апла, çавра ĕрчетес тени – вăл кашнин хăйĕн ĕçĕ пулмаллине пĕлтерет. Паллă, пурнăçра ун пекех пулма пултараймасть, анчах çавăн патне ăнтăлас пулать. Енчен те çын такам çаврине çавăрма пулăшать пулсан, унта та ку çавра ман тесе шутлама пулать. Мĕншĕн тесен çын тăвакан ĕçĕн пĕр пайĕ чăнласах та унăн. Кунта ним турткалашса тăмалли те çук. Кунта çав ĕçшĕн тĕрĕс тӳлемелле, çавă анчах. Çапах та çавра ĕрчетессине вĕçне çитерес тесен

кашнин хăйĕн ĕçне уçмалла пулать. Унсăрăн эпир çаврасен йышне ӳстереймĕпĕр. Вĕсем, каларăмăр, экономикăра тĕп вырăн йышăнаççĕ. Çавра çук-тăк, экономика та çук. Çурма çаврасем тăкак кăна кӳреççĕ. Тепĕр чухне, паллă, тăкак кӳнине пăхмасăрах çавăрттарма пулать çав çаврасене, калăпăр, вăрçă хатĕрĕсем тунă чухне, анчах та пуринпе те ун пек хăтанма май çук. Пур çавра-ĕçĕн те тупăшлă пулмалла.

Çавра çавăрттарса ярасси, ĕç уçасси ĕнтĕ, çăмăл япала мар. Кунта пĕр япалана тепĕр япала çумне е çынпа çынна пĕрле ĕçлеттернинче кăна мар, ку пулăмăн тупсăмĕ. Паллă, кирек мĕнле япала та, çын та пĕр-пĕринпе хипрĕçле пахалăхсемпе уйăрăлса палăрса тăраççĕ. Кашнин вăйлă-и вăл е вăйсăр – пурпĕрех мĕнле те пулин уйрăмлăх пур. Кунта çав уйрăм япаласене çыпăçтарма пĕлни кирлĕ. Пĕр-пĕрне хирĕçлекен япаласене е çынна çыпăçтарас тесен, çав хирĕçӳлĕхсене пĕтермелле. Мĕнле майпа тесе ыйтсан, хуравĕ тӳрех сиксе тухать. Япаласем хутшăнччĕр тесен, эпир пĕлетпĕр, вĕсен хушшинче темле икĕ пĕрне-пĕри хирĕçлекен объекта та çывăх виççĕмĕш япала пулмалла. Тĕслĕхрен, цементпа шыв пĕрне пĕри хирĕçлеççĕ. Вĕсем çыпçăнччĕр тесен вĕсене хăйăрпа хутăштармалла. Кун пек пĕр система питĕ нумайччен çирĕп тăма пултарать. Е тата, хутпа хута çыпăçтарас тесен вĕсен хушшине клей хумалла. Питĕ çирĕп конструкци пулать. ***Япаласене пĕрле ĕçлеттерес тесен, апла, хушшине е хушчине (опрседующий) тупмалла.*** Ку тупсăм хăй пĕр пысăк ăслай. Тĕнчери пур конструкципе технологи те çакăн майлă ăслайсем çине таянса йĕркеленнĕ. Машина тени ахальтен тенĕ пек чупса каяймасть. Тĕп элементсем ĕçлеччĕр тесен, вĕсене хушчисем пĕтĕçтерсе тăраççĕ.

Енчен те эпир ҫавра-ӗҫе мӗнле йӗркелемеллине пӗлетпӗр пулсан, тепӗр япалине те пӗлмелле. Мӗнле-мӗнле япаласене ҫыпӑҫтарса пире кирлӗ е пачах та кирлӗ мар япала тума пулать-ши, тесе шутламалла. Ҫынна тем те кирлӗ. Пуринчен ытла промышленноҫпа ял-хуҫалӑхне питӗ-питӗ нумай хушчисем кирлӗ. Пӗтӗм экономика йӗркеллӗ ӗҫлетӗр тесен, вӗсен ытлашши те, сахал та пулмалла мар. Калӑпӑр, ҫӗр айӗнчен шыв уҫлас тесен (шыв пур ҫӗрте те кирлӗ), чӑн малтан, ҫынпа шыв хушшине двигатель лартмалла, пӑрӑхсем хумалла. Вара тин ҫынна е пӗр-пӗр объекта кирлӗ шывпа ҫыхӑну пулать. Кирек мӗнле ӗҫре те ҫапла. Ӳсен-тӑрана ҫӗрпе лайӑхрах ҫыхӑнтарма ӗҫ хатӗрӗсем тата вӗсемпе усӑ куракан ҫын тата ытти япаласем кирлӗ. Выльӑх-чӗрлӗхе пӑхма ферма е ҫаран кирлӗ т.ыт.те.
Ҫак хушчисен выранне пӗлекен ҫын кӑна ӗҫе кирлӗ пек йӗркелесе яма пултарать. Кунта, Гегель пек каласан, ҫын чылай «чееленет». Ҫут ҫанталӑк саккунӗсене пӗлекен ҫут ҫанталӑк вӑйӗпе ним те мар усӑ курать. Ҫапла тума ӑна хушчисем пулӑшаҫҫӗ. Анчах ку саккуна пӗлни ҫителӗксӗр. Кунсӑр пуҫне ҫынра урӑх пахалӑх та пулмалла. Унӑн ним тумасан та хӑйне кирлӗ япалана пӗрех туса пӑхас килет. Укҫашӑн та мар. Кашни ҫыннӑн хӑйӗн интересӗ пур. Ҫавӑнпа та хӑш-пӗрисем тем тӗрлӗ «хоббисемпе» аппаланаҫҫӗ. Ку та ӗҫех. Ку, чи таса чун ӗҫӗ (чун экономики) тесе те калама пулать. Мӗншӗн тесен вӑл куншӑн укҫа ыйтмасть, вӑл чун мӗн ыйтнине кӑна тӑвать.
***Ҫакӑн пек ҫавра-ӗҫсем тӗнчене туса хураҫҫӗ те. Кун пек ҫавра-тӗнчене пӗтерме ҫук. Пӗри пӗтсен тепри тупӑнсах пырать.*** Ӑна эпир шӑтӑкла тесе те пӑхрӑмӑр. Ҫапла шӑтӑкла ҫыхнӑ тӗнчене чӑн-чӑн халӑх теме пулать. Мӗншӗн тесен кашни «шӑтӑкла» ытти

«шăтăклапа» çыхăннă. Кунта пĕри-тепĕринсĕр пурăнаймасть. Кунта хăй пĕр «команда» пур. Ку пысăк вăй.

Ĕç тăвакан çын кăна çăлăнса юлма пултарать тесе каласшăн эпир. Ĕлĕкрех ĕçлемен çынсене (тунеядецсене) вăйпа ĕçлеттернĕ. ***Чăн та, ĕçлемен çын хăвăрт пĕтет. Ĕçлекенни вара çĕр çула ним те мар çитет. Вăл çăлăннă пулать! Ĕçлекен çын ачисем те ĕçлĕ.*** Вĕсем халь ашшĕпе-амĕшне нихăçан та пăрахас çук, вĕсем чăн чăвашсем, ĕçлĕ чăвашсем пулса ӳсеççĕ. Калас пулать, вĕренме те ун пек ачасем ĕçе алла илесчĕ те, малалла ярасчĕ тесе тăрăшаççĕ. ***Ĕççĕр тăрса юлнă çынсем халь, асăрхăр, аташса каяççĕ. Вĕсем чысне те, илемне те час çухатаççĕ. Çавăн патне çитрĕмĕр мар-и халь. Çавăнпа та ĕçлĕ тĕнче туса хурасси чăвашăн чăн ĕçĕ пулса тăрать. Камăн хăйĕн тĕп ĕçĕ пур, çавă кăна чăн чăваш, çавă кăна çăлăннă пулать.***

Тĕрĕссипе каласан, кашни ял çынни хăй ĕçлĕ. Унăн хăйĕн хуçалăхĕ пур. Унта, каларăмăр, тĕп экоçуртсăр пуçне, тем те пур. Çав кил-çурт йĕркеллĕ тăрать пулсан, апла, хуçан хăйĕн ĕçĕ те пур. Çавă ĕç çаврăнса кăна тăрать. Кирек мĕнле ĕлкĕрсе пыр. ***Пурнăç вăл хăй пĕр кустăрма. Пĕр ĕç хыççăн тепри килет. Çапла çут çанталăк хыççăн ылмашăнса пынă та ĕç. Мĕншĕн тесен вăл – çут çанталăк çаври.***

Çавăн пек çут çанталăк çаври хула çыннисен те пур. Ăна – дача теççĕ. Тахçан каланăччĕ, Антика вăхăтĕнче те кашни пуян çыннăн хăйĕн пахчи пулнă тесе. Халĕ те çавах. Темле транснаци компанисемсĕр пуçне кашни хăйĕн пĕчĕк çаври пур. Ăна çемье çаври теме те пулать. Çемье ĕнтĕ вăл çав çут çанталăк çаврисене тытса пыракан вăй. Çавсене тытса пыма çуралнă та. Çав çаврапа килĕшӳ тунă

пулать те чи малтанхи çынсем. Çавра хăйне пăхса тăнăшăн çынна тăрантать. Пăхмасан, паллă, тăрантаймасть.

Хальхи вăхăтра çак килĕшӳллĕ çыхăну талнă тесен те юрать. Çынсем пĕри те хăйсене çĕр çаври умĕнче яваплă туймаççĕ. Çавăнпа та пуль çĕр пире тăрантми пулчĕ. Анчах та эпир йăлт пĕтмен-ха, эпир çĕр-шыв вăрттăнлăхне тĕпчесе пĕлсе тухнă хыççăн халь тин ĕнтĕ хамăр çĕр çаврисене пăрахмăпăр. Пушшех урăхла, эпир вĕсене ĕрчетсе пырăпăр. Анчах та çав ĕçе тума пире пĕлӳсĕр пуçне, чун вăйĕ тата укçа та кирлĕ. Чунĕ вăл пулĕ-ха. Анчах та укçа тени вара çукрах. Çапах та аптраса ӳкмелле мар. Пирĕн пĕр шухăшлă халăх пур. Вăл кирек хăш вăхăтра та пулĕшĕ. Тата пирĕн укçасăр экономика та пур. Каларăмăр, укçасăр экономика пĕр-пĕрне пулăшни çинче тытăнса тăрать. Пĕри-тепĕрне пулăшсан, пĕр укçасăрах ĕç тытса тума пулать. Ун пек йăла-йĕрке пирĕн çук мар. Аса илĕр-ха, нимесем мĕнлерехччĕ. Е, калăпăр, пĕри тепри чĕнмесĕрех пулăшма пырать, мĕн çитменнипе тивĕçтерет. Парнелет те. Хăйĕн мĕн пуррине пуринпе те пайлать. Ку пысăк вăй. Ку вăя çухатма юрамсть. Çук мар-ха вăл. Хальхи вăхăтри рынок тапхăрĕнче ку пулăм тата кирлĕрех пек туйăнать. Çаврана ĕрчетнĕ çĕрте, пирĕн шутпа, ку мел, укçасăр экономика ĕнтĕ, питĕ кирлĕ. халĕ çак хăватлă мелпе усă курса пăхар мар-и, çавă çаврасене ĕрчетес тесе.

Калăпăр, хула чăвашĕ хăйĕн ĕçне, йывăç япала тăвакан завод уçасшăн, хăй çаврине йĕркелесе ярасшăн. Мĕн кирлĕ çапла ĕç тума тесен, тӳрех калама пулать, тем те кирлĕ. Çавсене пăхса тухарха. Чăн малтан, каларăмăр, идея тата çав идейăна пурнăçа кĕртес текен вăйлă туйăм кирлĕ. Çапах та

ку, пирĕн шутпа, çителĕксĕр. Çак идейăпа туйăма конкретлăлатас пулать. Вăл çак ĕçĕн паттерне тупни пулать. Урăхла каласан, мĕнле организаци кирлĕ-ха. Çавра йĕркелес ĕçре организаци мелĕ мала тухса тăрать, хăйне майлă логистика. Ăçтан йывăçне илсе килмелле, кам мĕн хакпа ăна сутать. Мĕнлерех йывăç вăл тата, ăна та пĕлмелле. Илсе килнĕ йывăçне упрама складсем кирлĕ. Вĕсем тата мĕнлерех пулмаллине те чухламалла. Йывăçăн унăн майĕпен тата кирлĕ технологипе типсе выртмалла. Заводне пĕр çĕр татăкĕ çинче малтан пысăк тумасан та юрать. Калас пулать, кирек мĕнле ĕçе те пĕчĕккĕн пуçламалла. Тӳрех пысăккăн ярса илсен – ĕç ăнмасть. Ĕç опычĕ ĕçленĕçем хушăнса пырать. Йывăç япала кирлĕ текен клиентсем те япала пахалăхне кура хăйсемех тупăнса пыраççĕ. Хальлĕхе вара сире никамах та пĕлмест, çавăнпа та сирĕн хăвăра лайăх енчен кăтартма тăрăшмалла.

Йывăçне тупсан, унран вĕт тĕрлĕ япаласем ăсталамалла пулать. Тем тĕрлĕ станоксем кирлĕ. Станокĕсене ăшă та хӳтĕ вырăна вырнаçтарса лартмалла. Малтанлăха, каларăмăр, вăл пĕчĕк лесопилкăпа столярка кăна пулччăр. Ку та çителĕклĕ. Паллах, пĕтĕм ĕçе малтанлăха хăвăн туса пăхас пулать. Енчен те эсир ĕçĕн мĕнпур вăрттăнлăхĕсене хăвăр алăпа тытса, куçпа курса пĕлсе тухмасăр ĕç малалла каяймĕ. Çавăнпа та çанна тавăрса хăвăрăн ĕçлесе пăхмалла. Ĕç ăнса пырать пулсан, ытти çынсене те явăçтарма пулать. Ют çын ĕçне те хаклама пĕлес пулать. Вăл та ку манăн çавра ĕç тесе шутлатăр.

Каярахпа йывăçран тунă хатĕр япаласене упрамалли вырăн та кирлĕ пулать. Халь тин, япаласене илекен клиентсем пур пулсан, сирĕн завод çуралчĕ тесен те юрать – çавра çаврăнать. Çав çаврараН илнĕ тупă-

ша эсир ĕçе аслăлатма яма пултаратăр. Ун чухне вара сирĕн пĕчĕк завод та ӳсме тытăнать. Ку, тĕрĕссипе, йывăç тата клиентсем пуррипе çыхăннă. Енчен те рынок пур-тăк, эсир хăюллăнах хăвăрăн çаврана хăвăртрах та пысăкраххăн çавăрттарма пултаратăр. Анчах, асăрханăр, вунă прцентран ытла илме юрамасть. Ытларах илсен çавра пĕтме пултарать.

Çак чаплăн кăна курăнакан çаврана çавăрттарса яма мĕн кирлĕ тетĕр пулĕ те – тӳрех пуçа кĕрет – укçа кирлĕ. Укçине мĕнле тупмалла тет. Кунта пирĕн тăвансемпе юлташсем çине таянмалла тенисем аса килеççĕ. Кредит илсе талса пĕтме хĕн. Тăвансем пулсан вара, вĕсем сана пулăшаççех, вĕсемпе талма çăмăлрах. Тĕслĕхрен, калăпăр, станоксене эсир укçа тӳлемесĕрех, бартерпа талатпăр тесе илме пултаратăр. Чăн та, станокĕсем пулсан, малтанлăха уçă пĕлĕт айĕнче те ĕçлеме пулать. Укçи чăнласах та кирлĕ пулсан, сирĕн ăна кивçен илмех тивет. Кунта та пĕр мел пур – кашнинчен пĕчĕккĕн илес пулать. Сирĕн таврашра пуян çын çук пулсан, пĕчĕккĕн пуçтарсах пысăк укçа тупма пулать. Халь никамах та укçа кивçен парас çук текенсене çапла калас килет. Тăвансемпе тата юлташсемпе пĕрне пĕри пулăшса пымалла. Ку пулăшу малтанрах пуçланать. Енчен те эсир çак тĕнчере нихçан та никама та пулăшман пулсан, паллах, сире никамах та пулăшас çук. Ку – пурнăç аксиоми. Çавра çавăрттарса ярас ĕçре, каларăмăр, чи малтан пĕчĕккĕн пуçламалла. Кунта ĕçе пуçласа яма ытла пысăк укçа кирлĕ мар. Нумайăшĕ çакна пĕлмесĕр тӳрех тем пысăкăш производство пуçласа ярас тесе укçа шыраççĕ. Е кредит илсе путланса лараççĕ. Кредита ăна тавăрса памалла вĕт-ха. Çаври вара çаврăнса та каяйман – унăн та хăйĕн секречĕсем

пур. Вĕсене пĕлсе çитмесĕр ĕçе аслăлатма юрамасть. Рынок хăех кăтартать – пысăклатмалла-и унта, е пĕчĕклетмелле ку çаврана.

Эсир асăрхарăр пулĕ, хăвăр янтăланă çавран ытти çаврасемпе пĕр килмеллине. Çав майлаштару пур пулсан, апла, сирĕн продукци, вăл тӳрех курăнать, ытти çаврасене те кирлĕ. Рынок ыйтăвĕ, терĕмĕр. Чăн уçламăшĕнчех йывăç пирки шутланă чухнех, шутласа илĕр-ха, йывăçĕ те пĕтме пултарать вĕт. Эпир пĕлетпĕр, пĕтернĕ тесен те тĕрĕс. Çавăнпа та, çавра нихăçан та ан пĕттĕр тесен, йывăçа ăна сирĕн ӳстерсех тăмалла пулать. Йывăçа каснă вырăнсенче лесопунктсен вăйĕсемпе усă курса йывăçа лартсах тăмалла. Çавăн чухне кăна сирĕн çавра йывăç ӳстерекен çаврапа пĕр килет, çыпăçать тейĕпĕр.

Çавран продукцийĕ те çĕрсе выртмалла мар. Енчен те сирĕн продукци никама та кирлĕ мар пулсан, сирĕн ĕç харама каять. Çавра часах çаврăнма пăрахать. Продукцие вырнаçтарма пĕлмелле. Рынока пĕлмелле теççĕ. Маркетинг ĕçĕ хăй пĕр пысăк наука. Кирек мĕнле пулсан та сирĕн мала пăхса тăрас пулать. Паянхи продукци пурне те кирлĕ тесе пăхса савăнса тăмалла мар. Рынок питĕ хăвăрт улшăнать. Пĕр япалана тунă çĕртех, мала курса тăрса ĕнтĕ, тепĕр япалине тума хатĕрленсе тăмалла. Çавăн чухне анчах сирĕн çавра ытти пулас çаврасемпе майлашăнса каять.

Çавра ĕрчетес тенĕ çĕрте, хăйех курăнать, тем тĕрлĕ майсем уçăлаççĕ. Сирĕн вăй илнĕ фирма хăйĕн çум предприятисем уçма пуçлать. Апла, çавра ĕрчет. Вăл, апла, рынока çĕнсе илнĕ теме те пулать. Сирĕн, халĕ ĕнтĕ темиçе çавра, хăйне кăна кирлĕ рынок туса хунă. Хăй пĕр рынок, тейĕпĕр. Халĕ тин пурте йĕркеллĕ пек. Анчах та, эпир таçти

пиртен аякра тăракан çаврасем мĕнле ĕçленине чухласах каймастпăр, çавăнпа та пĕр кĕтмен çĕртен çаврасен майлашĕвĕ сасартăк улшăнса каять. Сирĕн монополи те пĕтет. Халь тин пурнăçа пачах урăхла япаласем кирлĕ тет. Кăна та питĕ хатĕрленсе тăрас пулать. Производствăна хăвăрт улăштарса урăх япала хатĕрлеме пĕлмелле. Ку çăмăл мар, тĕрĕссипе, ку ĕçе хăвăрăнах йĕркелесе пымалла та, анчах та рынок вăл рыноках, вăл хăш еннелле çаврăнса ӳкнине никамах та пĕлмест. Ку ăнсăрт япала. Кунта пĕртен пĕр çăлăну – сирĕн производствăн улшăнса ĕçлме хатĕр тăмалла.

Çаврана çавăрттарса ятăр пулсан, сирĕн çавра обществăпа пĕр пулмалла. Унăн тупăшĕ пурнăç пурăнма кăна мар, обществăна аталантарма та каймалла. Общество тесе эпир кунта халăха калатпăр. Халăхпа пĕрле пурăнмалла тени – унăн социаллă пурнăçне лайăхлатса пымаллине пĕлтерет. Кунта хăйне майлă корпораци саккунĕсем ĕçлеме пуçламалла. Производство кашни ĕçченшĕн тăрăшать. Вĕсен çемйисене те пăхать. Кил-çурт лартмаилме, кану йĕркелеме тата пĕлӳ ӳстерме пулăшмалла. ***Пур енлĕ пулăшу пулсан кăна сирĕн фирма лайăх ĕçлеме пултарать. Çавăн чухне кăна кашни ĕçлекен çын ку ман çавра теме пултарать. Вара тин пĕр çавра çемье çуралать – çавна корпораци теме пулать. Пĕр пек шухăшлă, пĕр пек тыткалакан, пĕр пек калаçакан тата пурăнакан çынсем халăхăн чăн никĕсĕ пулса тăраççĕ.*** Çакă пулать те ĕнтĕ вăл – çавра ĕрчетес тени. Халь тин кун пек çаврасене никам та пĕтереймĕ, халăхĕ те питĕ хăвăрт та хăватлăн ĕрчесе кайĕ, мĕншĕн тесен унăн никĕсĕнче пĕр çирĕп тытăмлă çаврасем выртаççĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, мĕн чухлĕ çавра нумайрах, çавăн чухлĕ çирĕпрех тăрать ку тĕнче. Пĕр çаври

пётсен те ун вырӑнне тепри тапса тухать. Ҫаврасем, каларӑмӑр, вӗсем чӗрӗ организмсем пекех. Вӗсене пурнӑҫ пани – пурнӑҫа, халӑха малалла тӑсни пулать.

## 3.3. Ҫураҫуллӑ пурнӑҫ

Ҫӑлӑнӑҫ философийӗ пирки калаҫнӑ чухне унӑн тӗп шӑнӑрне лайӑхрах палӑртмалла пек туйӑнать. Япала, энерги тата информаци ҫаврисене пӑхса тухнӑ чухне, чӑн малтан, эпир ҫавран пайӗсем питӗ ҫураҫуллӑ пулни пирки калаҫрӑмӑр, тӗрӗссипе, вӗсем хӑйне майлӑ автопоэзлӑ пулӑмсем пулса тӑраҫҫӗ. Автопоэзлӑ тени, аса илтерер, пӗри тепӗрне пулӑшса пырса пӗри тепӗрне ҫӗнетсе пынине пӗлтерет. Ҫавна пула ӗнтӗ ҫаврасем хӑйсем тӗллӗнех ҫаврӑнма пултараҫҫӗ. Кун пек тума кашни организм пултарать. Ҫавра та – организм. Унӑн, каларӑмӑр, гомеостатлӑ шухӑшлав пур. Вӑл кирек мӗнле условисенче те хӑйӗн шалти параметрӗсене упраса хӑварасшӑн тӑрӑшать. Ҫакна эпир шухӑшлав никӗсӗ вырӑнне хурса хакларӑмӑр. Пӗрне тепӗринпе ҫураҫтарни те, апла, чӑн шухӑшлав. Ку, шухӑшлавӑн тата тарӑнрах никӗсӗ. Пӗр иккӗленмесӗрех калама пулать. Кам та кам ҫураҫтаруллӑ шухӑшлать, ҫав тӗрӗс шухӑшлать. Ку, Гегель каланине аса илтерет. Вӑл каланӑ тӑрӑх кам та кам хирӗҫтӑрупа тӗл пулать, ҫавӑ тӗрӗс ҫул ҫинче тӑрать.

Ҫураҫтарупа хирӗҫтӑру тӗнчен уйрӑлми пулӑмӗсем. Пирӗн шутпа, хирӗҫтӑру пур пулсан, ҫураҫтару та пур. Вӗсем кашни пулӑмӑн пӗрин мӗн ҫитменнине тепӗринпе ҫитерсе тӑраҫҫӗ. Ку та тӗлӗнмелле пулӑм. Енчен те хальхи вӑхӑтри ҫын пурне те хирӗҫтӑруллӑ курать пулсан, ҫав вӑхӑтрах таҫта тӗнче никӗсӗнче ҫураҫтару та пур. Ун пек

пулăма эпир çаврасенче куртăмăр. Чăн та, тĕнче çураçтарса пурăнать. Эпир каларăмăр, хирĕç тăракан япаласем хушчисем пулăшнипе пĕри тепĕринпе майлашаççĕ те пĕр çавра туса хураççĕ. Анчах та пĕр шайран тепĕр шая куçнăçемĕн, çавра организм хăйĕн интересĕсемшĕн çине тăма пуçласан хирĕçтăру пуçланать. Мĕншĕн тесен кирек мĕнле ĕçре те ресурс лимичĕ пур. Урăхла каласан пире кирлĕ япала яланах çителĕксĕр. Çав япалашăн пуçланать те тупăшу. Ку та питĕ объективлă. Кăна эпир пурăнан пурнăçра куллен курса тăратпăр. Тупăшнине куратпăр, анчах та ун никĕсĕнче çураçтару выртнине курмастпăр. Чунпа питĕ аслă, тарăн ăслă çынсем кăна тĕнче никĕсĕнче çураçтару пулнине чухласа илеççĕ те тупăшакан çынсене пурне те каçарма тăрăшаççĕ. Кусем хăйсем мĕн тунине те чухламаççĕ теççĕ.

Çапах та, тӳрех каласа хăвармалла, тупăшакан çын яланах активлă, хăйĕн йăрăлăхне пула яланах çиелте, вăл хăйне мĕн кирлине кирек мĕнле условисенче те тупатех, хăй пурнăçне пурнăçлатех. Кун пек туни пĕрре те япăх мар, анчах та ыттисене шута илмесĕр тунă ĕç хăçан та пулин катастрофа патне илсе çитерет, терĕмĕр. Çакна ăнланса илсен тӳрех калама пулать, хирĕçтăру вăл пĕр кĕске вăхăтра тата пĕр татăк вырăнта кăна пулма пултарать. Пĕр пĕтĕмĕшле пăхса илсен вара, калăпăр, çаврана эпир система пек курса тăратпăр пулсан вара, унта пурте çураçуллă пулнине куратăн. Система çураçусăр пурăнма пултараймасть. Кашни система хăй организм. Эшби каланă тăрăх, кашни кăткăсрах система хăйне ăслă-тăнлă тыткалать. Çавра хăйне çапларах тыткалать те.

Хирĕçтăру пирки калаçнă чухне, малтанрах каларăмăр, икĕ япала хушшинче пĕри тепĕрне май-

лаштаракан япала, хушчи, пур терĕмĕр. Енчен те хушчийĕ тупăнчĕ-тĕк, ăна тупма питĕ кансĕр, вара хирĕçтăру çухалать. Тупăшу çураçтарăва куçать. Çут çанталăк хăйне майĕпен пĕрмаях майлаштарса пырать пулсан, ку пулăм обществăра та хуçаланать, апла, çут çанталăк çав хушчисене пĕр вĕçĕмсĕр комбинацисем туса шыраса тупать. Хирĕçтăрăва эпир, тен, шырав ĕçне курса калатпăр. ***Икĕ пулăм е япала пĕр пĕринпе çураçтару шыраса кăна тупăшаççĕ.*** Ахальтен мар хирĕçтăрăва аталăнăвăн пĕр вăйĕ пек хакласçĕ. Хирĕçтăру – аталанун шалти вăйĕ, теççĕ. ***Çураçтару вара – система аталанăвĕн тулашри вăйĕ.*** Чăн та, кирек мĕнле япала та, хирĕçтăрусем урлă каçса пулса çитнĕ пулсан, тулашран пăхсан питĕ меллĕ те çыпăçуллă курăнать. Мĕншĕн тесен вăл майлашса çитнĕ, ыттисемпе çураçуллă. Кирек мĕнле система та çураçуллă. Енчен те унта темле хирĕçтăрусем пур-тăк, апла, вăл система пулса çитеймен. Пулса çитнĕ система кăна тулашри вăйсене хирĕç тăма пултарать. Вăл вĕсемпе çапăçмасть, тупăшмасть, вăл хăйĕн шалти тытăмне кăна улăштарать. Унăн тытăмĕ халĕ кăткăсрах та ăслăрах пек курăнать. Вăл халĕ хăйĕн шалти параметрĕсене çирĕпрех тытса пыма пултарать. Çакă пулать те ĕнтĕ тулашри условисене кура кашни организм хăйне хăй никам пулăшмасăрах кирлĕ параметра улăштарса суйласа илет тени (естественный отбор).

Çут çанталăк туса янă çаврасем хăйсем тĕллĕнех çаврăнма пултараççĕ терĕмĕр. Вĕсене пĕтерес тесен те пĕтерме çук. Вĕсем чăн-чăн организмсем. Анчах та çын туса янă организмсем питĕ черчен. Тулашри условисем кăшт улшăнсанах вĕсем ванма тытăнаççĕ. Пĕр çĕрте талчĕ-тĕк, тепĕр çĕрте те талма тытăнать. Вĕсем вара, пурăнас тесех ĕнтĕ,

çын пăхманнине кура, çут çанталăк çаврисем патне таврăнаççĕ. Унта каллех хăйсем тĕллĕнех çаврăнма тытăнаççĕ. Анчах та хăйсен тупăшлăхне çухатаççĕ те пысăк усă параймаççĕ. Вĕсене эпир гомеоссем, терĕмĕр. Çын тунă культурăллă çаврасене вара гуманеоссем, терĕмĕр. Пирĕн çăлăнăç тĕллевĕ çав гуманеоссемпе ĕçлемеллине пĕлтерет. çавсем кăна тупăш пама пултараççĕ. Вĕсене вара пĕрмаях пăхса тăмалла, унсăрăн ансатланса кайса гомеоссене куçса каяççĕ.

Çын тунă кашни çавра хăй тĕллĕн кăна çаврăнтăр тесен, вĕсене хирĕçтăрусенчен йăлт тасатмалла пек туйăнать. Вара нимле урăх тумхах та çаврана çаврăнма кансĕрлемест. Галилейĕн инерции законĕ пек курсан, çав çавран пĕр вĕçĕмсĕр чарăна пĕлмесĕр пĕр пек çаврăнмалла. Ку гомеоссен саккунĕ, тейĕпĕр. Çав саккун ĕçлетĕр тесен, çаврара нимле хирĕçтăру та пулмалла мар. Вăл хăйне майлă идеал-машина пулмалла. Анчах та эпир шалти хирĕçтăрусене пĕтерсен те тулашри хирĕçтăрусене нихăçан та пĕтерееес çук. Тулашри вăйсем пирĕн çаврана хирĕç тăрса чарса лартма е таткалама пултараççĕ. Вĕсемпе мĕнле кĕрешмеллине эпир пĕлместпĕр. Мĕншĕн тесен тулашри хирĕçтăру пĕр кĕтмен çĕртен кирек мĕнле вăхăтра сиксе тухма пултарать. Тĕнче никĕсĕнче саккун тени кăна мар, ăнсăртлăх тени те пур.

Кун пек ситуацинче тĕрлĕ май тупма пулать. Тулашри вăйсене хирĕç тăма, вĕсемпе çураçма тата хăвна улăштарса улшăнма пулать. Хирĕç тăрас тенисене тӳрех пăрахăçлама пулать. Ку хирĕçтăрăва вăйлатать. Вара пĕри тепĕрне пĕтериччен тенĕ пек вăрçă пуçланать. Кун пек пулăмсене истори нумай кăтартса пачĕ. Кашни хирĕçтăруллă куçăма тепĕр хирĕçтăруллă куçăм тупăнатех.

Çураçтару мелĕсемпе усă курсан вара тулашри хирĕçтăран вăйсене те пĕтерме пулать. Пĕрремĕш вăл, каларăмăр, тулашри вăйсене хирĕç тăмасăрах шалти тытăма улăштарни. Паллах, пĕрремĕш тапăнăва чăтма çирĕп организм кирлĕ. Çаврана эпир организм выраннех хуратпăр. Тепĕр тапăннă çĕре пирĕн çавра-организм хăйне майлă иммунитет-тытăм туса та хунă. Халь тин кирек мĕнле тапăнăва та вăл пĕр хирĕç тăмасăрах хăйне кăна улăштарса сирсе ярать. Вăл усала çăтса ярать, тейĕр. Ăна маналла аталанма памасть. Çавра çапла хăтланать те. Кирек мĕнле мелпе усă курсан та çавра варринче çын хăй тăрать. Унăн ăсĕпе ĕçĕ тытса тăраççĕ çаврасене. Гуманеоссем вĕсем яланах çынлă. Çын кайсан вĕсем, каларăмăр, ансатланаççĕ те гомеоссене куçса каяççĕ.

Паллах, организм тулашри вăйсене парăнма та пултарать. Ун чухне вăл хăй тытăмне улăштарса çитерсе хăйне пăрахать те тулаш вăй тытăмĕпе пурăнма пуçлать. Ун пеккине эпир обществăра часчасах куратпăр. Кун пирки тĕплĕнрех те калаçса илес килет. Çаврасем вĕт вĕсем çут çанталăкпа хуçалăхра кăна мар, вĕсем обществăра та çаврăнса тăраççĕ.

Пĕр пĕтĕшле илсен общество çаврисем информациллĕ çаврасем. Анчах та кирек мĕнле информаци те япалапа тивĕçтернипе çыхăннă. Сăмах ĕçлĕ пулмалла теççĕ. Çавра сăмах вĕççĕн çеç тытăнса тăма пултараймасть. Паллах, эпир пурте пĕлетпĕр, малтан сăмах пулнă, кайран кăна тĕнче хăй йĕркеленнĕ. Вĕсем хушшинче тачă çыхăну пур. Обществăра та çавах. Çын хушшинчи çаврасем чăнласах та çураçуллă пулмалла. Çураçтару тени кунта тĕрĕслĕх тени çинче тытăнса тăрать. Тĕрĕслĕх çук пулсан, тӳрех çав çавра талать те халăх пăлханма

тытăнать, революции пуçланать. Революцисем пуçланни те, апла, халăхри çаврасем татăлнипе çыхăннă. Кун пек шутлани классем пуррипе ăнлантарнинчен тарăнрах та пулĕ. Революции тăвас пулсан пурнăç çаврине тат. Революции пулчĕ те.

Кулленхи пурнăçра вара çынсен хушшинчи çавра, ăна ***халăх çаври*** тейĕпĕр, нихăçан та талмасть. Хальхи вăхăтра пурнăç тĕрĕс марлăхпа çыхăннă, çынсем пĕр тан мар тенисем вĕсем пурте пуяс текен шухăша сăлтавлама шыраса тупнă мелсем. Халăх çаври çаврăнтăр тесен, çавран тĕрĕслĕх, пĕр танлăх тата ирĕклĕх çине таянса çаврăнма тивет. Ахальтен мар çак хаклăхсем: ирĕклĕх, пĕр танлăх, тĕрĕслĕх тенисем хăйне майлă идеал пулса тăраççĕ. Унсăрăн май та çук. Мĕншĕн тесен халăх çаврине çак идеал çăвăрать. Пĕри кăна пĕттĕр, çавра çавăнтах чăхăмлама тытăнать. Сăмахран, информацине ирĕклĕ куçма чаратпăр. Халăх çаври малалла мĕн тума пĕлмен пирки тӳрех чарăнса ларать. Япала куçăмне чарсан та çавах – пасар ĕçлеме пăрахать. Тĕрĕсмарлăх хуçаланма тытăнсанах пĕрисем пуйса каяççĕ, теприсем чухăн çӳреççĕ. Танмарлăх тесен, ку вара тата тарăнрах. Танмарлăх çынна пурăнмалăх пĕр пек условисем тума чарса тăрать. Пĕрисем вара лайăх, теприсем япăх аталанаççĕ. Пурте вĕсем халăх çаврисене çаврăнма чарса тăраççĕ. Пурнăç, халь ĕнтĕ, çавра шайĕнче куратпăр, çавăнпа маллала каяймасть. Çаврасем япăх çаврăнаççĕ. Вĕсене çаврăнма чарса тăракан тумхахсем: тĕрĕсмарлăх, ирĕксĕрлĕх, танмарлăх.

Çавра çине таянса пăхсан тӳрех курăнать, çавра идеалсемпе никĕсленет. Урăхла каласан – çураçтару кирлĕ. Çураçтару тени халăх çаври тĕрĕслĕх, ирĕклĕх, пĕр танлăх çине таянса çаврăннине пĕлтерет. Ку тата пысăкрах ăнлану.

Идеал пулсан халăх çаври пĕр вĕçĕмсĕр çаврăнать. Енчен те идеал хăш енчен те пулсан калчĕ-тĕк, мĕнле те пулсан тĕрĕсмарлăх е танмарлăх тупăнчĕ-тĕк, ку тумхахсем çавра çаврăнăвне тӳрех чарса ăна улăштарма тытăнаççĕ. Тепĕр чухне халăх çаври вара йăлтах чарăнса ларать. Кун пеккине эпир халь пур çĕрте те куратпăр.

***Çăлăнăç çулĕ пирки калаçнă чухне, апла, çут çанталăкпа хуçалăх çаврисем çинчен кăна мар, халăх çаври çинчен те калаçас пулать. Вĕсем пурте идеал çине таянса пĕр хирĕçтăрусăр çаврăнаççĕ пулсан кăна пурнăç аталанса каять.*** Халăх çаври те çынран хăйĕнчен килет. Анчах та кунта общество саккунĕсем вăйлăрах палăраççĕ. Çынсем хăйсем хушшинче мĕнлерех калаçса татăлаççĕ, çавра та çапла çаврăнса каять. Чăвашсем вара, калас пулать, кун пирки калаçма кăна мар, шухăшласа та пăхман-ха. Çавăнпа та вĕсен çаврисем калама çук япăх çаврăнаççĕ.

**Юлашкинчен калани**

Хамăр халăхăн çăлăнăç çулĕ пирки шухăшласан, çаврасем хăйсем кăтартаççĕ, пирĕн идеалсем çинчен тĕплĕнрех шутлама тивет пуль. ***Пирĕн çăлăнăç – идеал, тесен те юрать.*** Идеалсене эпир халь йăлт пăрахнă. Çын вара идеалсăр пурăнма пултараймасть. Прогресс тени те вăл япала пухни мар, вăл çын хаклăхне çӳле çĕклени. Пуринчен ытла халăх идеалĕсене тытса пыни вырăнлă. ***Халăх идеалĕсем пирĕн тăванлăх, йĕрке тата чӳклĕх тенĕччĕ. Çав идеала тытса пырсан кăна чăваш ырă курăнать. Унăн пурнăçĕ те ырăллана туртăнать.***
Ку шухăш хăйне майлă пĕтĕмлетӳ теме те пулать. Эпир чăвашăн чăн çулне тупрăмăр пек туйăнать. Çав çулпа каякан кăна çăлăнать. Ыттисем йăлт пĕтессĕн. Пурнăçра кăна чăнласах курса тăратпăр мар-и вара. Чăваш халăхĕ юр пек ирĕлет. Мĕншĕннине халь тин ăнлантăмăр. Эпир хамăр халăх çаврине çавăрттарма пăрахрăмăр. Пирĕн идеалсем çук. Эпир вĕсем çинчен шухăшламастпăр та. Халĕ мĕнле те пулин çăкăр çиесчĕ-ха, ытти тем мар, тени çителĕксĕр. Хамăрăн идеалсем çине таянса халăх çаврине çавăрттарса ярсан кăна эпир те чăн пурăнма пуçлăпăр-ха та, анчах мĕн чарса тăрать пире, тӳрех ăнланса та илейместĕн. Çавăнпа та ку ĕçри шухăшлавсем вĕсем пуçламăш шухăшсем кăна. Кунта, тен, йăнăшни те пур. Унсăрăн пулмасть. Çапах та хамăр çулсем çинчен шутласа илни кирлех. Ку ĕçе кирек кам хутшăнма, çырма, хирĕçлеме пултарать. Никама та чару çук. Çавăнпа та ку автор ĕçĕпе килĕшместĕп тесе ларни çителĕксĕр. Хăвăрăн тытса тăвас пулать. Ун чухне

вара эсир тин çăлăнатăр пулĕ тетĕп. Эсир хăвăрăн çавруна çавăрттарса ярсан, урăхла каласан, хăвăрăн ĕçĕре пуçарса ярсан, тĕлĕнмелле çулсем татах уçăлĕç. Пурнăç малалла вĕт-ха. Халăх идеалсем çине таянса вара эсир чăнласах чăн чăваш пулатăр та тĕнчене хăвăрăн шухăш-кăмăлăрпа, çавра ĕçсемпе пуянлатнă пулăттăр. Тĕнчерен илетĕп те пуян пулатăп тесе лармалла мар, Ку çителĕксĕр. Илессе ил те хăвăнне те пар. Хăвăнне пани ĕнтĕ вăл халăх çаврине çавăрттарса яни. Ку мĕнле халăх тесе калатччĕр. Хальлĕхе вара эпир ыттисенчен илнине куратпăр, ыттисене панине курсах каймастпăр. Сăмахран, ĕлĕкрех чăваш хăмли, чăваш тракторĕ çаврасем пурччĕ. Тахçан авал чăваш улми çаври те пулнă. Халĕ çав çаврасем çуккă. Мĕнле те пулин çаврасем пулмаллах ĕнтĕ вĕсем. Вĕсем эпир пĕтменнине, пуррине, малалла аталаннине кăтартса тăнă пулĕччĕç.

Çăлăнăç çулĕ, куртăмăр, питĕ тумхахлă. Çаврасене çавăрттарса яма питĕ йывăр. Вĕсен çулĕ çинче тем тĕрлĕ тумхах. Пиртен кăна килмеççĕ вĕсем тата. Кăна та ăнланмалла. Тĕнче хальлĕхе хăй çапла. Вăл пурне те мур шăтăкне сĕтĕрет. Пурпĕрех пĕтетĕр тет. Кун пирки уççăнах лĕхĕлтетсе кулса калаçаççĕ. ***Пирĕн вара пĕтĕм вăя пухса хамăрăн чи пысăк пулăма – çаврана кăларса тăратмала. Акă эпир епле çаврасăсем, курăр, темелле. Пирĕн çăлăнăç çулĕ вăл – çавра çулĕ.*** Çавăнпа та пурне те çапла ыйтса каланă пулăттăм – çавра çавăрма вĕренесчĕ. Çавă пулать чăн чăваш ĕçĕ. Кунта чăваш пирки çырнă пулсан та мĕн шухăшлани пурне те пырса тивет пек туйăнать. Куншăн пире сивлеме çук. Мĕншĕн тесен эпир тĕнче ыйтăвĕ çине таянса ĕçлерĕмĕр. Пĕтĕм тĕнче халь мĕнле те пулин татах та мала сывлас тесе, çăлăнăç çулне шырать.

Тупмалли

Умсăмах....................................................................3
1. Глава. Тĕнче никĕсĕ....................................................6
1.1. Тĕнче çаври..............................................................6
1.2. Çын вырăнĕ..............................................................11
1.3. Çавра тупăшĕ...........................................................18
2. Глава. Хуçалăх.............................................................27
2.1. Хуçалăх çаврисем.....................................................27
2.2. Укçасăр экономика...................................................34
2.3. Экоçурт.......................................................................43
3. Глава. Экоçын...............................................................52
3.1. Экоçынпа çут çанталăк çыхăнăвĕ.........................52
3.2. Çавра ĕрчетĕвĕ..........................................................60
3.3. Çураçуллă пурнăç.....................................................69
Юлашкинчен калани.........................................................76

Сарри Мишши
(Михаил Павлович Желтов)

**ФИЛОСОФИЯ СПАСЕНИЯ**

Руководитель проекта – В.П.Иванов

Формат 60х84/16
Бумага офсетная. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 4.9.